ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Февраль
29
ЭРНЕКУН
№ 43 (9695)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. РСФСР Верховнăй Советне пухасси çинчен (1 стр.).

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).

Хамăр республика тăрăх (1 стр.).

Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ. И. Зайцев. — Çĕрĕç культурине ÿстерсе пымалла; **П. Анисимов.** — Ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешетпĕр; **Г. Кузьминская.** — Çĕнĕ ăратлă сыснасем ĕрчетер; **И. Осипов.** — Ялхуçалăхне вăйлăн аталантарса пырассишĕн (2 стр.).

ВАРМАН ПРОМЫШЛЕННОÇĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫТНЕ АНЛĂ САРАР! **Ф. Романов.** — Социализмлă ăмăртăва вăйлатар; **Сысуйкин меслечĕпе ĕçлесе. Н. Вильдяев юлташ докладĕнчен; Поток—ĕç тухăçлăхне ÿстермелли меслет. Улатăр вăрманпромхозĕнчи бригадир Ф. Тырлышкин юлташ докладĕнчен; Стахановла ĕçлеме вĕрентетĕп.** Вăрнар вăрманпромхозĕнче ĕçлекен П. Егоров юлташ докладĕнчен (3 стр.).

Совет Союзĕпе Монголи пĕр-пĕринпе договор тунăранпа ултă çул тултарнă ятпа (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Çурçĕр Атлантика союз совечĕн Лиссабонри сессийĕ пирки (4 стр.).

Колхоз производствин мастерĕсене вĕрентсе хатĕрлессине тĕпрен лайăхлатмалла

Иртнĕ çултан пуçласа пирĕн çĕршывра колхоз производствин мастерĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçре çĕнĕ йĕрке туса хунă. Халĕ колхозсенче агротехникăпа зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем ĕçлеççĕ. Вĕсенче колхозниксем производствăран уйрăлмасăр вĕренеççĕ. Курссене ертсе пыма ялхуçалăх специалисчĕсене уйăрнă. Пирĕн республикăра пĕлтĕр çак курссенче 12 пин çынна яхăн вĕренсе, пĕрремĕш çул программине ăнăçлăн вĕçлерĕç. Çакă вĕсене çуллахи хĕрÿллĕ ĕçсенче пысăк пулăшу пачĕ.

Çав юлташсенчен нумайăшĕ кăçал иккĕмĕш çул вĕренеççĕ. Унсăр пуçне, кăçал пĕрремĕш çул вĕренме тытăннă колхозниксен йышĕ те пĕлтĕрхинчен кая мар пулма тивĕçлĕ. Вĕсем пурте хăйсем суйласа илнĕ специальноçсене вĕренсе алла илессишĕн, колхоз производствин чăн-чăн пултаруллă мастерĕсем пуласшăн.

Республикăри колхозсенче массăллă квалификациллĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕç мĕнле пыни çинчен нумаях та пулмасть ВКП(б) обкомĕн бюровĕ сÿтсе яврĕ. Тĕрĕслесе пăхса çакна палăртнă: колхоз правленийĕсем, районсенчи ялхуçалăх пайĕсем, ялхуçалăх пропагандин ушкăнĕсем тата ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем виçĕ çуллăх курссен ĕçĕпе кулленех интересленсе пулăшса пынă çĕрте колхозниксен хĕллехи вĕренĕвĕ лайăх пулса пырать. Нумай колхозсенче ку тарана ситиччен 6—7 заняти е ытларах та ирттернĕ. Вĕренекенсем валли çителĕклĕ условисем туса панă.

Пĕтĕмĕшпе илсен вара агротехникăпа зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем республикăра çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Ялхуçалăх министерствипе унăн вырăнсенчи органĕсем хакламасăр тăнă пирки, чылай районсенче колхозниксен вĕренĕвне питех те начар организациленĕ. Пĕр-икĕ тĕслĕх илсе кăтартатпăр. План тăрăх, Октябрьски районта виçĕ çуллăх агрозоотехника курсĕсенче 500 çын вĕренмелле, унта 280 çынна кăна вĕренĕве хутшăнтарнă. Çавăн пекех Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Ишлей, Канаш районĕсенче те курссенче вĕренме колхозниксене явăçтармалли плана тултарман.

Нумай колхозсенче занятисене начар ирттереççĕ, чылай чухне вĕсем пачах та пулмаççĕ. Ку тарана çитсе те пĕр-икĕ заняти кăна ирттернĕ колхозсем республикăра самаях нумай. Занятисем пуринчен ытларах ялхуçалăх специалисчĕсен айăпне пула, вĕсем пыман пирки пулса иртеймеççĕ. Ишлей районĕнчи ялхуçалăх пайĕн главнăй агрономĕ Федоров юлташ, главнăй зоотехник Громов юлташ тата ытти специалистсем те февралĕн пĕрремĕшне çитиех занятисем ирттерме тытăнман. Сĕнтĕр районĕнче ветеринари врачĕ Прямчук тата ветфельдшер Арочкин юлташсем занятисем ирттерме тытăнман пулнă. Çакăн пек тĕслĕхсем Шăмăршă, Шупашкар тата ытти районсенче те пур.

Районсенчи ялхуçалăх пайĕсемпе вĕсен пропаганда ушкăнĕсем преподавательсене куллен пулăшса тăмаççĕ, агрозоотехника курсĕсенче вĕренÿ пахалăхне хăпартас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Нумай районсенче курссенчи преподавательсен канашлăвĕсемпе семинарĕсене ирттермеççĕ, районсенчи педагогика совечĕсен ĕçне йĕркелесе яман.

Курссен ĕçĕнчи чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл—унта занятисене час-часах колхоз практикипе çыхăнтармасăр ирттерни пулса тăрать. Занятисене ирттернĕ чухне нагляднăй пособисемпе, уйрăммăнах колхоз производствинче суйласа илнĕ экспонатсемпе сахал усă кураççĕ. Курсра вĕренекенсене ятарласа ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе кăларнă кинокартинăсем кăтартмаççĕ.

Республикăра агрозоотехника курсĕсем начар ĕçлени вăл Ялхуçалăх министерстви çак ĕç хăй тĕлĕн пулса пырасса шанса тăнинчен килнĕ. Уйрăмах министерствăн ялхуçалăх пропагандин управленийĕ питĕ çителĕксĕр ĕçленине палăртса хăвармалла. Унăн начальникĕ Абакумов юлташ вырăнсенче курссем мĕнле ĕçленине пĕлмест, вĕсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатма тăрăшмасть.

Çав вăхăтрах ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем те чылайăшĕ колхозниксен хĕллехи вĕренĕвне ертсе пырассинчен пăрăнса тăраççĕ, колхозсенчи агрозоотехника курсĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Агрозоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссен ĕçне ертсе пырас тĕлĕшри çак пысăк çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерни кирлĕ. Курссенче планпа палăртнă чухлĕ колхозниксем вĕренччĕр тесе, курссен занятийĕсем пĕр сиктермесĕр тата лайăх пахалăхпа пулса иртчĕр тесе, вĕренÿ программи тĕплĕн пурнăçа кĕрсе пытăр тесе вырăнсенчи партипе совет организацийĕсен тата колхоз правленийĕсен куллен тăрăшас пулать. Курссен ĕçне колхоз практикипе тачăрах çыхăнтарас шутпа, вĕсенче вĕренекен колхозниксене республикăра е районта малта пыракан лайăх колхозсене экскурсие илсе кайса кăтартмалла, малта пыракан колхозниксен опычĕпе паллаштармалла.

Курссенчи вĕренÿ пахалăхĕ преподаватель мĕнле хатĕрленсе пынинчен нумай килет. Çавăнпа та преподавательсен квалификацине ÿстерес, вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе вырăнсенчи ялхуçалăх органĕсем татăклă мерăсем йышăнма тивĕçлĕ. Курссен преподавателĕсем валли районсенче семинарсем пухмалла, вĕсен занятийĕсене çулĕ пусăмра ирттермелле тăвас пулать.

Март уйăхĕнче агрозоотехникăна вĕренес ĕç мĕнле пулса пынине кашни районта тĕплĕ тĕрĕслесе тухмалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем колхозсенчи агрозоотехника курсĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăма, бюро ларăвĕсенче вăхăтран вăхăта курс заведующийĕсен доклачĕсене илтсе сÿтсе явма, вĕсене çитменлĕхсене пĕтерес ĕçре пулăшма тивĕçлĕ. Çапла тусан кăна колхоз кадрĕсене виçĕ çуллăх курссенче вĕрентмелли плана апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулать.

Республикăри тата районсенчи хаçатсем умĕнче те ку тĕлĕшпе пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен агрозоотехника курсĕсем мĕнле ĕçленине, ку тĕлĕшри лайăх опытсемпе çитменлĕхсене хăйсен страницисенче тăтăшах çутатса тăрас пулать. Республикăри хаçатсенче курссен преподавателĕсене пулăшакан материалсемпе консультацисем пичетлени те питĕ вырăнлă.

Тырпул тухăçлăхне малалла ÿстерес тата выльăх-чĕрлĕх хисепне йышлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне хăпартас енĕпе ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕп задачăна татса пама хамăрăн агрозоотехника пĕлĕвĕсене пуянлатса пыни, наука кăтартса панисене тата малта пыракансен опытне колхоз производствине анлăн кĕртсе пыни кирлĕ. Апла пулсан, агротехникăпа зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссен ĕçне лайăх йĕркелесе яни ялхуçалăхне малалла аталантарса пымалли паха условисенчен пĕри пулса тăрать. Çакă вара колхоз производствин мастерĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе тĕпренех лайăхлатма тата хăвăртлатма хушать.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

РСФСР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТНЕ ПУХАССИ ÇИНЧЕН

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла **йышăнать:**

Российăри Федерациллĕ Советлă Социализмлă Республикăн Верховнăй Совечĕн иккĕмĕш сессине 1952 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче, Мускав хулинче пухас.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. ТАРАСОВ.
РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ И. ЗИМИН.

Мускав, 1952 çулхи февралĕн 27-мĕшĕ.

Семенов стахановец Çĕмĕрлере пулни

ÇĔМĔРЛЕ, **(Хамăр корр.).** Çак кунсенче сĕтел-пукан комбинатĕнчи стахановецсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире Канашри вагонсем юсакан заводра сменăри задание 7 сехетре хăвăртрах та пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарса яракансенчен пĕри—паллă стахановец П. Семенов юлташ хăйсен опычĕ çинчен каласа пачĕ.

Канашсем çĕнĕ ăмăрту пуçарни çинчен хаçатсем пĕлтерсенĕнех, сĕтел-пукан комбинатĕнчи рабочисем ку хыпара интересленсе кĕтсе илчĕç. Ăмăрту пуçаракан хăй каласа пани вĕсен кăмăлне татах çĕклерĕ. Рабочисем пĕрин хыççăн тепри трибуна умне тухса ăмăртăва анлăн сарса яма май пуррине палăртрĕç.

Сĕтел-пукан комбиначĕ иртнĕ çула ăнăçлă вĕçлерĕ—плана 119,4 процент тултарчĕ. Кăçал коллективăн пĕлтĕрхинчен 34,5 процент ытларах продукци туса памалла.

Комбинат коллективĕ умĕнче тăракан çак пысăк задачăна пурнăçлас тесе, конференцире пулнă стахановецсем çĕнĕ обязательство çирĕплетрĕç. Рабочисем 1952 çулхи производство планне декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне чакарма пулчĕç.

Совет Союзĕ тăрăх

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе ĕçсыннисен ăмăртăвĕ сарăлса пырать

МУСКАВ. Мускаври метрополитена тăвакансен коллективĕ çак кунсенче ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем турĕ. 1-мĕш номерлĕ строительство коллективĕ лайăх ĕçлет. Мордасов, Поляков тата Нуштайкин юлташсен проход бригадисем, механизмсемпе пĕлсе усă курса, уйăхри плана 7 кун маларах тултарчĕç.

Главтуннельметростройăн пĕр цехĕн коллективĕ нормăна чылай ирттерсе тултарать. Кунти стахановецсем производство заданийĕсене виçĕ хута яхăн ирттерсе тултараççĕ.

СЕРОВ (Свердловск облаçĕ). Серов ячĕпе тăракан металлурги завочĕ çĕршыври чи лайăх металлурги завочĕсенчен пĕри шутланать. Завод коллективĕ февраль уйăхĕнчи 25 кун хушшинчи задание пурнăçа енĕпе те ирттерсе тултарчĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн сессине парне хатĕрлесе, Лопатинпа Павлов горновойсен, Чеклецов тата Зимакин хурçă шăратакансен бригадисем планран ирттерсе çĕршер тонна металл шăратса кăларнă.

Калибр цехĕнче ĕç тухăçлăхне ÿстермелли çĕнĕ майсем тупнă. Семков инженер туса хатĕрленĕ схемăпа усă курса, прокатчиксем валоксемпе усă курас вăхăта 122 сехет чухлĕ ÿстернĕ. 25 кунхи задание Сероври металлурги заводĕнчи прокатчиксем 10 процент чухлĕ ытла ирттерсе тултарнă.

ВЛАДИВОСТОК. СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, Артемовскри 9-мĕш номерлĕ шахтăри хисеплĕ шахтерсен Якунинпа Гаранин юлташсен комплекслă бригадисем сменăра икĕ циклтан кая мар тума сăмах панă. Бригадăсем февраль уйăхĕнче планран ирттерсе 100-шер тонна топливо пама пулнă. Якунин юлташ коллективĕ, обязательствăна чылай ирттерсе тултарса, планран ирттерсе пилĕкçĕр тонна кăмрăк кăларнă.

Хисеплĕ шахтерсен примерĕпе шахтăри ытти горняксем те ăмăртăва хутшăннă.

Февралĕн 26-мĕшĕнче шахта кăмрăк кăлармалли уйăхри плана тултарнă.

(ТАСС).

Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарни

Мускавра пулнă чаплă лару

Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнине совет халăхĕ февралĕн 26-мĕшĕнче анлă палăртрĕ.

Юбилей ячĕпе Мускавра чаплă лару пулнă. Союзсен çуртĕн Колоннăй залне совет общественноçĕн нумай представителĕсем, ученăйсем, писательсем, искусство деятелĕсем, столицăри предприятисенчи стахановецсем, аслă шкулсенчи студентсем пухăннă. Унта ют çĕршывсенчен килнĕ хăнасем, вĕсен шутĕнче—Францин паллă писателĕ Поль Элюар, Виктор Гюго ачин ачи ывăлĕ—Жан Гюго художник, мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе Корейăра ĕçлекен комитетăн председателĕ Хан Сер Я писатель, Турцин паллă поэчĕ Назым Хикмет пулнă. Ларăва Мускаври посольствăсемпе миссисен пуçлăхĕсем те пынă.

Сцена çинче Виктор Гюгон пысăк портречĕ, ăна чĕрĕ чечексемпе илемлетнĕ.

Чаплă ларăва К. М. Симонов уçнă.

— Гюго ячĕ,—тенĕ вăл,—тĕнчери мĕнпур рядовой çынсемшĕн хаклă, çав çынсен чĕрисенче Гюго «чĕррисем кĕрешеççĕ» тесе калани тарăн вырнаçнă.

Шăпах та вĕсем, çав рядовой çынсем, культурăн нумай ĕмĕрсем хушшинчи историйĕн тăршшĕнче литература, искусство тата наука енĕпе туса хатĕрленĕ чи лайăх пуянлăхсен чăн-чăн хуçисем пулса тăраççĕ.

Гюго пĕтĕм тĕнчери тÿрĕ кăмăллă мĕнпур çынсемшĕн питĕ хаклă тата çывăх. Вĕсем паян пирĕнпе пĕрле: «Аслă писателе, этемлĕхе юратакан Виктор Гюгона—чыспа мухтав, эпир ăна юратса тав тăватпăр», тесе калаççĕ.

Гюго çинчен И. И. Анисимов профессор доклад тунă. Вăл Виктор Гюго пурнăçĕпе творчестви çинчен тĕплĕ каласа панă. Гюго литература енĕпе 60 çул ытла ĕçленĕ.

Реакци ялăнах Виктор Гюгон чаплă сăнарне варалама тата унăн пархатарлă шухăш-ĕмĕчĕсен пĕлтерĕшне пĕчĕклетме тăрăшнă. Çавна пула та ĕнтĕ юбилей кунĕсенче прогрессивлăй этемлĕх Францин паллă писательне хăйĕн соратникĕ тата хăйĕн мухтава тивĕçлĕ çынни тесе пĕлтерни тата хытăрах янăраса илтĕнет.

Гюго творчествипе Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем хытă интересленеççĕ. Гюго—тĕнчери литературăн пирĕн çĕршывра чи хытă хисеплекен тата юратакан классикĕсенчен пĕри.

Паянхи юбилее совет çыннисем пур çĕрте те хаваслăн уявлаççĕ. Вĕсем илемлĕ те чаплă произведенисен, рядовой çынна мухтаса, унăн пултарулăхне ĕненсе çырнă илемлĕ произведенисен авторне тивĕçлипе хисеплесе асăнаççĕ.

Ларура культура деятелĕсем: Илья Эренбург, Константин Федин, Микола Бажан тата Мамед Рагим писательсем, вырăссен вата актриси А. А. Яблочкина, В. Пудовкинпа А. Хорава артистсем, Турци поэчĕ Назым Хикмет сăмах тухса каланă. Вĕсем ирĕклĕхе юратакан Франци халăхĕн аслă ывăлне тулли кăмăлпа хĕрÿллĕн юратни тата хисеплени çинчен каласа панă.

Франци поэчĕ Поль Элюар хĕрÿллĕ сăмах каланă.

Мана кунта, Совет Союзĕнче, Франци поэзийĕ ячĕпе Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнине палăртмалли чаплă уявра сăмах тухса калама питĕ хисеплĕ шăпа тухрĕ, тенĕ вăл.

Виктор Гюго юбилейне ирттерсе, Ленинпа Сталин çĕршывĕ миршĕн кĕрешекен мĕнпур çынсене, çĕр чăмăрĕ çинчи тÿрĕ кăмăллă мĕнпур çынсене пĕрлешсе кĕрешме чĕнет.

Юлашкинчен пысăк концерт пулнă. Унта совет искусствин паллă мастерĕсем хутшăннă. Виктор Гюго сăввисене вуласа панă, унăн пьесисем тăрăх хатĕрленĕ спектакльсен тата писатель произведенийĕсен шухăшĕсем тăрăх çырнă музыкăна кĕртнĕ спектакльсен сыпăкĕсене выляса кăтартнă.

* * *

В. Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнă ятпа Ленинградра, Киевра, Минскра, Алма-Атара, Ригăра, Вильнюсра, Ереванра, Кишиневра, Фрунзе хулинче тата çĕршыври ытти хуласенче пухусемпе каçсем пулса иртнĕ.

Атăл хĕрринчи çĕнĕ хула

Сталинград патĕнче, Атăлăн сулахай çыранĕнче, Сталинград гидроэлектростанцийĕн строителĕсем валли çĕнĕ хула тăваççĕ. Пурăнмалли вуншар çурт туса лартнă ĕнтĕ, обществăллă çурт-йĕрсем тăваççĕ, уйрăм урамсем, площадьсемпе проспектсем курăнма пуçларĕç.

Çĕнĕ хулан генеральнăй планне СССР Архитектура академийĕн хуласем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен институчĕн сотрудникĕсемпе пĕрле хуласен проекчĕсене тăвакан государство институчĕн архитекторĕсемпе инженерĕсем туса хатĕрленĕ. Халĕ архитектура мастерскойĕнче клуб-театрăн, обществăллă организацисен çуртĕн, гостиницăн тата ытти çуртсен проекчĕсене туса пĕтереççĕ. Вĕсене хула варринчи площадьре туса лартаççĕ. Клуб-театр çуртне илемлетекен скульптурăсем питĕ пысăк гидроэлектростанци строителĕсен ĕçри паттăрлăхне кăтартса параççĕ.

Çавăн пекех шкулсен, ача сачĕсемпе яслисен, гидроэлектротехникумăн, сыхăну çуртĕн, çăкăр завочĕн çуртсене тата ытти культурăпа йăла, коммунальнăй сооруженисен проекчĕсене туса хатĕрлеççĕ.

Хулана гидроэлектростанци енчен пырса кĕрекен тĕп вырăна «Сталинградгидрострой» управленийĕн икĕ пысăк çуртĕ илемлетмелле. Çуркунне культурăпа кану паркне хывма тытăнаççĕ. Вăл 25 гектар пысăкăш пулмалла. Атăл юппин—Ахтуба шывĕн çыранĕ хĕрринче спорт çурчĕсемпе хатĕрĕсем вырнаçса тухаççĕ. (ТАСС).

Дон çулне тÿрлетеççĕ

НОВО-СОЛЕНОВСКИ (Ростов облаçĕ), февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Цимлянски водохранилищăн пĕвинчен аяларах Дон виçĕ çĕрте кукăрăлса илет. Ку вăл пăрахутсене çÿреме чăрмантарать тата вĕсен çулне вăрăмлатать. Строительсем юханшыв çулне тÿрлетме шутланă. Халĕ юханшыв кукăрăлнă вырăнсенче çав ĕçсене пурнăçа кĕртме хатĕрленме тытăннă. Юханшыв тÿрленнĕ çĕрти Каргальски районĕнче пулас каналăн трассине тăваççĕ.

Юханшыва тÿрлетнĕ çĕрте пилĕк землесоснăй снаряд ĕçлеме тытăнать. Вĕсен 4 миллион кубометра яхăн тăпра чавса кăлармалла пулать.

Каналсене туни суднăсен çулне 8 километр ытла кĕскетме май парать.

Хамăр республика тăрăх

Продавецсăр ĕçлекен киоск

Шăнкăрав сасси вĕренекенсене урок вĕçленни çинчен пĕлтерчĕ. Пысăк та çутă классенчен вĕренекенсем коридора тухрĕç.

Коридорăн пĕр вĕçĕнче—хĕрлĕ пусма витнĕ пысăк сĕтел. Ун çинче хитре кĕнекесемпе çĕнĕ хаçат-журналсем. Стена çине «Продавецсăр ĕçлекен киоск» тесе çырса çапнă. Кунта кĕнекесемпе хаçат-журналсем темиçе çĕр тенкĕлĕх выртаççĕ пулин те вĕсене сутма киоскер тăратман. Ачасем кирлĕ кĕнекесене суйласа илеççĕ те укçине çавăнтах «касса-копилка» тесе çырнă ещĕке яраççĕ. Люда Потапова «Русские народные сказки» ятлă кĕнекене суйласа илет те укçине «касса-копилкăна» ярать. Люда хыççăн, ытти вĕренекенсем те пĕрин хыççăн тепри «Огонек», «Мурзилка», «Физкультура и спорт» журналсемпе «Пионерская правда», «Комсомольская правда» хаçатсене илчĕç, укçисене шутласа яра хăварчĕç. Çапла ĕçлет те ĕнтĕ Шупашкарти хĕрачасен пĕрремĕш вăтам шкулĕнче продавецсăрах сутакан киоск.

Продавецсăрах ĕçлекен киоск кашни кун çĕр тенкĕ таран тавар сутать. Кунта укçине ещĕке ямасăр кĕнекесемпе хаçат-журналсене илни нихçан та пулман.

Çак киоска усăс тĕлĕшпе шкулти учительсем нумай ĕçленĕ.

Шупашкарти «Союзпечать» уйрăмĕ çакăн пек киоскесем хулари ытти шкулсенче те уçма палăртнă.

В. МИХАЙЛОВ.

Шупашкар хула Совечĕн сессийĕнче

Февралĕн 26-мĕшĕнче ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн IX-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сессире хула Совет исполкомĕн 1951 çулхи ĕçĕсем çинчен исполком председателĕн заместителĕ **А. Киселев** юлташ доклад туса пачĕ.

Хуçалăхпа культура строительствине малалла аталантарма хула Совет исполкомĕ иртнĕ çулта хăйĕн организациллĕ-массăллă ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Хулара çĕнĕрен çурт-йĕрсем—36 хваттерлĕ çурт, ача яслисемпе сачĕсем, икĕ çĕнĕ шкул тунă. Хула çăн-сăпачĕ çулсерен илемленсе пырать. Хальхи вăхăтра хулара тата поселоксенче ĕçсыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерме 25 тĕрлĕ çуртсем тăваççĕ.

Исполком 1951 çулхи бюджета тупăшсем енĕпе 109,5 процент, расходсем енĕпе 103,9 процент тултарнă. Укçа-тенкĕ пухмалли плана, пĕтĕмĕшпе илсен, 105,1 процент тултарнă. Анчах та ку тĕлĕшпе исполкомăн чылай çитменлĕхсем пур-ха. Сăмахран, оборотран илекен налог планне тултарман.

Вырăнти тата коопераци промышленноçĕ ĕçсыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларас, продукци пахалăхне ÿстерсе, хăйне ларакан хакне чакарас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Вырăнти промышленность çулталăкри плана 102,4 процент тултарнă.

Иртнĕ çулта плана тултарман предприятисен йышĕ сахалланчĕ, продукци пахалăхĕ чылай ÿсрĕ, продукци ассортиментне нумайланчĕ. Ку тĕлĕшпе хулари промкомбинатпа апат-çимĕç комбиначĕ лайăх ĕçлеççĕ. Анчах та çак çитĕнÿсемпе пĕрлех вырăнти промышленность ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пур. Хулари тăвата артель хăйсен плачне тултарман. Вăл артельсенче продукцин хăйне ларакан хакĕ те пысăк.

Хула Совет исполкомĕ вырăнти тата коопераци промышленность ыйтăвĕсене сахал мар сÿтсе явнă, анчах та йышăннă решенисене мĕнле пурнăçланине çителĕклĕ тĕрĕслемен.

Докладчик çакна палăртать: исполком пайĕсенче ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтересси çителĕксĕр пулса пырать. Ку тĕлĕшпе уйрăммăнах коммунальнăй хуçалăх пайĕ начар ĕçлет.

Пренире тухса каланă депутатсем **С. Миронов, А. Старостин, А. Кошечкин, С. Иванова** тата ытти юлташсем те исполком хула благоустройствине, культурăпа çутĕç учрежденийĕсене çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕç, çитменлĕхсене пĕтерме паха сĕнÿсем пачĕç.

Сессире Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ **И. Афанасьев** юлташ тухса каларĕ. Вăл уйрăмах хула Совет исполкомĕ строительство ĕçĕсемпе, хула благоустройствипе çителĕксĕр интересленнине палăртрĕ.

Сесси сÿтсе явнă ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Кино работникĕсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта районти кинофикаци пайĕсен начальникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу халăха кино кăтартас ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе яврĕ. Ку ыйтупа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕн начальникĕ Г. Трофимов юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх пренире 16 çын тухса каларĕ. Вĕсем ялсенче кино кăтартас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç, çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç.

Канашлу участникĕсем халăха кино кăтартас ĕçе лайăхлатас шутпа Мари республикинчи кино работникĕсемпе ăмăртăва тухса, социализмлă обязательство йышăнчĕç. Кино работникĕсем халăха кино кăтартас ĕçе татăклăнах лайăхлатма, кино кăтартса укçа-тенкĕ пухмалли плана срокчен тултарма пулчĕç.

Ишлей районĕ тăрăх

Колхоз театрĕ ялсенче. Çак кунсенче Сыпайкасси, Ишек, Ишлей, Кăшавăш, Минтер тата ытти ял Совечĕсенчи колхозсенче республикăри куçса çÿрекен колхоз театрĕ пулчĕ. Артистсем колхоз сценисем çинче А. П. Чеховăн «Упа», «Усал тунă çын» тата «Юбилей» пьесисене выляса кăтартрĕç.

Культура таварĕсем туянаççĕ. Районти ĕçсыннисен пурнăçпа йăла условийĕсем лайăхланса пыраççĕ. Вĕсем культура таварĕсем ытларах та ытларах илме тăрăшаççĕ. Иртнĕ çул кĕске вăхăтра райпотребсоюз культура таварĕсем 114 пин тенкĕ яхăн сутнă. Çав шутра 85 велосипед, 56 радиоприемник т. ыт. те.

Аш-какай парса татнă. «Мичуринец» колхоз государство умĕнчи обязательствăсене ялан вăхăтра пурнăçлать. Çак çулти 1-мĕш кварталта аш-какай памалли плана вăл 135 процент тултарчĕ.

Государствăна 1952 çулхи аш памалли обязательствăна Сталин ячĕпе тăракан колхоз та тултарчĕ.

Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ

Çĕрĕç культурине ӳстерсе пымалла

В. ЗАЙЦЕВ,
Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ

Колхозсем пысăк ситĕнӳсем турĕç. Çакă вăл ку канашлура колхоз председателĕсем тухса каланинчен те лайăх курăнать. Манăн хамăрăн колхоз ситĕнĕвĕсем çинчен каласа парас килет.

Вăрçăччен эпир вăтам шутпа кашни гектартан 7—8-шар центнер тĕштырă пухса илнĕ. Халĕ эпир 20—25-шер центнер пухса кĕртетпĕр. Техникăллă культурăсен тухăçлăхĕ 3—4 хут ӳсрĕ, уйрăмах кантăр тухăçлăхĕ нумай ӳсрĕ. Вăрçăченхи çулсенче кашни гектартан 3—4 центнер кантăр вăрри туса илнĕ пулсан, халĕ эпир çулсерен 11—12-шер центнер пухса илетпĕр.

Колхоз хуçалăхĕн нумай отраслисем аталанаççĕ. Эпир çулсерен 60—70 гектар техникăллă культурăсем акатпăр, 1950 çултанпа колхоз кок-сагыз акма тытăннă. Колхоз 15 гектар çĕр лаптăкĕ çинче сад ĕрчетрĕ, 2 гектар çинче питомник турĕ, 1,5 гектар çинче хăмла вырăнĕ тунă, халĕ ăна 3,5 гектара çитеретпĕр. 10—15 гектар çĕр лаптăкĕ çинче пахча çимĕçсем ӳстеретпĕр. Колхозăн вылăх-чĕрлĕх фермисем — циллĕк. 1946 çултанпа 10 уйлă пусă çавранăшĕ йĕркеленĕ. Нумай çул ӳсекен курăксене лайăх ӳстерме вĕрентĕмĕр. Курăк вăрри тухăçлăхĕ çултан-çул ӳсет.

Агротехника чылай лайăхланчĕ, июнĕн 1-мĕшĕччен сĕртме тăватпăр, 23—27 сантиметр тарăнăш сухалатпăр. Çулсерен уя 15—17-шер пин тонна, кашни гектар пуçне 10—12-шер тонна тислĕк кăларатпăр. Кунсăр пуçне 8—10-шар центнер фосфорлă удобренисем кăларатпăр. Çу кăçиччен сĕртме уйне ик-виçĕ хут кăпкалататпăр. Сĕртме уйĕнче пĕр курăк та ӳстерместпĕр.

Эпир ыраша августăн 15-мĕшне 20-мĕшĕ хушшинче акатпăр. Суркунне калчана апат паратпăр, «Зиг-заг» сӳрепе икĕ хутчен сӳрелетпĕр.

Иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 24,5-шер центнер кĕрхи тырăсем туса илтĕмĕр. Сапожников ертсе пыракан бригада гектартан 31-шер центнер, 3-мĕш бригада—27-шер центнер, 4-мĕш бригада—26-шар центнер пухса кĕртрĕ.

Çуртрисене акма хатĕрленме эпир кĕрхи тырăсене пухса кĕртнĕ хыççăнах тытăнатпăр. Хăмăла сухаланă хыççăн сентябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне кĕрхи сĕртме туса пĕтеретпĕр. Çуркунне минераллă удобренисене сĕрĕк тăприпе хутăш кăларатпăр, «зиг-заг» сӳрепе сӳрелетпĕр, кайран культиваци тунă хыççăн акатпăр. Çуракине кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа иртеретпĕр.

1951 çулта колхоз мĕнпур тулла хĕреслĕ майпа акса хăварчĕ. Иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 22-шер центнер çурхи тулă туса илтĕмĕр. Уйрăм бригадăсем кашни гектартан 30-шар центнер тата ытларах та пухса кĕртрĕç. Колхоз 1951 çулта 1.280.442 тенкĕ тупăш илчĕ.

1951 çулта ĕçкунĕсем тăрăх вăтам шутпа 4-шар килограмм тырă валеçрĕ. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе нумай тырă тата укçа илчĕç. Ĕçшĕн хушса тӳлеме колхоз 765 центнер тырă уйăрчĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне пĕррремĕш бригада—5 килограмм та 40 грамм тырă, иккĕмĕш бригада—7 килограмм, виççĕмĕш бригада—6 килограмм ытларах, тăваттăмĕш бригада—5,4 килограмм валеçнĕ.

Колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлеме 1951 çулта 137 пин тенкĕ укçа уйăрнă.

Пирĕн артель членĕсем ситес ик-виç çултан çулсерен вылăх-чĕрлĕхрен 400—500 пин тенкĕ тупăш илме задача лартрĕç. Колхозăн тупăшне ситес икĕ-виçĕ çул хушшинче 2 миллион тенке ситермелле.

Пĕрлешнĕ хыççăн тунă çитĕнӳсем

Т. ТИМОФЕЕВА,
Первомайски районĕнчи Шверник ячĕпе тăракан колхоз председателĕ

Пирĕн колхоза халиччен вăйлах аталанса пырайман икĕ пĕчĕк ялхуçалăх артелĕ пĕрлешнĕ. Вĕсенчен уйрăмах Литвинов ячĕпе тăракан колхоз юлса пынă. Вăл çултан-çул агротехникăллă ĕçсене пурнăçа кĕртсе пыман, пĕчĕк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Общественлă вылăх-чĕрлĕх шучĕ сахаллăччĕ, унăн тухăçлăхĕ пĕчĕккĕччĕ, вылăхсене лайăх пăхса усрама витесем ситейменччĕ. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа пыраймастчĕ.

Икĕ пĕчĕк колхоза пĕрлештернĕренпе хăвăт нумаях та иртмерĕ пулин те артель [illegible] йăхланма пуçларĕ.

Çĕре лайăх сухаласа çемçетсе, ялхуçалăх ĕçсене вăхăтра туса пырса, пĕлтĕр пирĕн акнă çĕр лаптăкĕнчен эпир кашни гектартан вăтам шутпа 14,5-шер центнер тĕштырă, 307 центнер çĕрулми, кашни гектар пуçне 17,8-шер центнер ыраш пухса кĕртрĕмĕр. Артель государствăна тырă тата ытти продуктсем вăхăтра парса татрĕ. Уставпа пăхнă фондсене пĕтĕмпех турĕ.

Вылăх кĕтĕвĕсене ӳстерес енĕпе те хăшпĕр çитĕнӳсем тунă. Общественлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана колхоз пур вылăх енĕпе те тултарчĕ. Вылăхсем ăшă витесенче тутă хĕл каçаççĕ. 1951 çулта пирĕн колхоз ĕне, лаша, сысна тата кайăк-кĕшĕк витисем турĕ. Çав ĕçсене пĕчĕк колхозсем ăнăçлă пурнăçлама пултараймастчĕ пулсан, пĕрлешнĕ пысăкланнă ялхуçалăх артелĕ витесем тума та ытти ĕçсене пурнăçласа та вăй çитерет.

Эпир тунă çитĕнӳсем малтанхи утăмсем кăна-ха. Артель хуçалăхĕ пурне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе малашне тата та тимлĕрех ĕçлеме тивет.

Иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсем колхозниксене пысăк [illegible] ĕçлеме май параççĕ. Вĕсем 1952 çулта кашни гектартан 110-шар пăт ыраш пухса кĕртме, ытти тĕштырăсен, техникăллă культурăсен, тымарсимĕçсен тухăçлăхне ӳстерме, агротехникăна лайăхлатма сăмах пачĕç.

Халĕ пирĕн колхозниксем хĕрсе çурама хатĕрленеççĕ. Вăрлăхсем хатĕр. Ялхуçалăх инвентарĕсене юсаççĕ. Иртнĕ [illegible] уй-хире 6.000 центнер [illegible]

[illegible] пама усă курас тетпĕр. Вырăнти минераллă удобренисене шыв-шур пуçтарса уй-хире турттаратпăр.

Вăрлăх хатĕрленмелли плана пĕтĕмпех тултартăмăр, çавăнпа та уй-хире вырăнти удобренисем кăларас ĕçе вăйлататпăр.

Малашне эпир хамăр ĕçре вăйлă тырпул мастерĕсен опычĕпе анлă усă курма хатĕрленетпĕр, колхоза малта пыракан ялхуçалăх артелĕсен ретне кăларма тăрăшатпăр.

Эпĕ çакна ĕненсе тăратăп: Мордва республикинчи ял ĕçченĕсем вăйлă тырпул çитĕнтерессишĕн пирĕнпе социализмлă ăмăртура ĕçлеме чĕнсе каланине Чăваш республикинчи колхоз председателĕсем хапăлласа йышăнĕç, эпир пурте çав ăмăртура мала тухассишĕн тăрса ĕçлĕпĕр.

Артель хуçалăхĕ тĕрекленет

М. СТЕПАНОВ,
Ишлей районĕнчи «За коммунизм» колхоз председателĕ

Пĕрлешсе пысăкланнă хыççăн пирĕн колхоз иртнĕ çулта артель хуçалăхне çирĕплетес тĕлĕшпе малтанхи çитĕнӳсем турĕ. Сăмахран, тĕштырă культурисен тухăçлăхне, иртнĕ çулхинепе танлаштарсан, кашни гектар пуçне 4—6 центнер чухлĕ ӳсрĕ. Пĕлтĕр çĕрулмие çитĕнме çанталăк лайăххах тăмарĕ пулсан та, эпир çак культурăна кашни гектартан 145-шер центнер пухса илтĕмĕр.

Колхоз общественлă продуктивлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур вылăх енĕпе те тултарчĕ. Вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ чылай ӳсрĕ. 1950 çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа суталăкра 683 литр сĕт суса илнĕ пулсан, пирĕн дояркăсем кашни ĕнерен 1.110-шар литр сĕт суса илчĕç. Çакна май колхоз вылăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутса пысăкрах тупăш илме тытăнчĕ. Государствăна сĕт памалли плана срокчен тултарнă хыççăн, эпир тата 30 пин литр сĕт сутрăмăр, ГАЗ-51 автомашина туянтăмăр. Иртнĕ çултах пирĕн колхоз государствăна 1952 çулшăн [illegible] малли плана тултарчĕ. Халĕ эпир государствăна 1953 çулшăн пама 10 сысна самăртатпăр. Вĕсен чĕрĕ виçи 120 килограмран кая пулмасть.

Пирĕн артельте хуçалăхăн пулăшуллă отраслĕсене аталантарассипе çине тимлĕ пăхаççĕ. Колхозăн 12 гектар çĕр лаптăкĕ çинче çимĕç сачĕ тата общественлă пахча пур. Улма-çырла тата пахча çимĕçсем сутса пирĕн колхоз иртнĕ çулта 47 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

Пирĕн колхоз членĕсем МТС ĕçне лайăххах [illegible]. Нумай трактористсем колхоз уй-хирĕсенчи тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе хăйсем умĕнче тăракан задачăсене ăнланса илмен, тăпрана сухаласа çемçетнĕ чухне агротехника правилисене пăсаççĕ, çапла вара колхозсене пысăк сиен кӳреççĕ. [illegible] Ишлей МТС-ĕнче ĕçлекенсене [illegible] çĕре сухаласа [illegible] договорта кăтартнă срокченсенче пурнăçласа пымалла.

Ялхуçалăхне вăйлă аталантарса пырассишĕн

И. ОСИПОВ,
ВКП(б) Мордва обкомĕн секретарĕ

Мордва халăхĕ тăванла Чăваш республикин экономики тата культури аталанса пынине тимлĕ сăнаса тăрать, унăн çитĕнĕвĕсемпе савăнать. Сирĕн республикăри вăйлă тырпул мастерĕсен ячĕсене нумайăшне пирĕн республикăри ялхуçалăх работникĕсем лайăх пĕлеççĕ. Пĕлтĕр Мордва республикинчи колхоз руководителĕсен ушкăнĕ Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче пулчĕ. Çав колхозăн çитĕнĕвĕсене пирĕн пурин те тĕплĕн тĕпчесе цĕренмелле.

Большевиксен партийĕ, халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе Мордва республикинчи ĕçсыннисем экономикăпа культура тĕлĕшпе ĕмĕртен юлса пынине пĕтерчĕç, вĕсем промышленноçа, ялхуçалăхне, халăх пурнăçне лайăхлатса тата ӳстерсе пыраççĕ. Мордва республикин ялхуçалăхне государство пысăк пулăшу панине çаксенчен те лайăх курма пулать: пирĕн МТС-сен трактор паркĕн хăвачĕ, 1940 çулхипе танлаштарсан, пĕрре çурă хут, комбайнсен паркĕ—икĕ хут ытла ӳсрĕç. Юлашки икĕ çул хушшинче кăна республикăри МТС-сем 2.056 условнăй трактор, 821 комбайн, 190 сложнăй молотилка, 2.000 трактор сеялки, çавăн пекех ытти ялхуçалăх машинисем те нумай илчĕç. Кăçал пирĕн республикăри МТС-сем хăватлă гусеничнăй тракторсем 430, комбайнсем 400, трактор сеялкисем 685 туянаççĕ, ытти машинăсем те нумай килмелле.

Пĕчĕк артельсене пĕрлештерсе пысăклатни колхозсенче техникăпа туллинрех усă курма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, артель производствин пур отраслĕсене те аталантарса пыма лайăх майсем туса пачĕ. Пуян техникăпа пĕлсе усă курса, пирĕн республикăри МТС-семпе колхозсем 1951 çулта пур ялхуçалăх ĕçĕсене те йĕркеллĕ туса ирттерчĕç.

Социализмлă Ĕç Геройĕ Анисимов юлташ ертсе пыракан Ардатов районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, совет агрономи наукин çитĕнĕвĕсене тата малта пыраканĕсен опытне производствăна кĕртсе пырса, кашни гектартан туса илекен тĕштырă тата пăрçа йышши культурăсен тухăçлăхне 18,4 центнера çитернĕ.

Калошкино районĕнчи «Новая жизнь», Лямбирски районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан, Темниково районĕнчи «Путь Ленина», Теньгушевски районĕнчи «Обновление» колхозсенче вăтам шутпа кашни гектартан 24—26-шар центнер тĕштырă туса илнĕ.

Пысăк тухăçлă техникăллă культурăсем туса илекен колхозсен шучĕ те республикăра çулсерен ӳссе пырать. Сăмахран, Рыбкински районĕнчи «Заветы Ильича» колхоз вăтам шутпа кашни гектартан тăхăр центнер кантăр сӳсĕ, 40 центнер махорка пухса кĕртнĕ; Атяшевски районĕнчи «Путь Ильича» колхоз кашни гектар пуçне 26-шар центнер кок-сагыз тымарĕ çитĕнтернĕ. Лубенски районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, «Коммунар», Кадошкински районĕнчи «Ленинский путь», «Ленина» колхозсем пĕлтĕр кантăр акса 700—800-шер пин тенкĕ тупăш панĕ.

Мордва республикинчи колхоз [illegible] общественлă продуктивлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлерĕç. Пирĕн республикăра колхозсенчи общественлă вылăх-чĕрлĕх, совхозсенчипе пĕрле илсен, мĕнпур вылăх-чĕрлĕхĕн пысăк пайĕ пулса тăрать. Вăтам шутпа кашни фермăна майракаллă шултра вылăх 357-шер пуç, сурăхсем 394-шар пуç, сыснасем 170-шер пуç тата кайăк-кĕшĕк 798-шар пуç тивеççĕ.

Пирĕн республикăра общественлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăх туса пыракан колхозсем сахал мар. РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Храмов юлташ ертсе пыракан Теньгушевски районĕнчи «Обновление» ялхуçалăх артелĕ виçĕ çуллăх плана пур вылăхсем енĕпе те срокчен ирттерсе тултарчĕ, вылăхсен шучĕ 1953 çул вĕçĕ тĕлне пулмалли пысăклатса пана минимума та ирттерсе пурнăçларĕ. Çак колхозăн вылăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăшĕ 1951 çулта 400 пин тенке çитрĕ е колхоз илнĕ мĕнпур тупăшран вăл 45 процент пулать. Зубово-Полянски районĕнчи «12-й Октябрь» колхоз вылăх-чĕрлĕх продукчĕсенчен çур миллиона яхăн тупăш илчĕ, вăл мĕнпур тупăшăн 60 процентĕ пулать.

Ĕнесенчен сĕт нумай суса илес енĕпе Мордва республикинче уйрăмах Желябов ячĕпе тăракан совхоз палăрса тăрать. 1950 çулта кунта кашни ĕнерен вăтам шутпа 4.100-шер литр, пĕлтĕр вара 5.000-шер литр сĕт суса илнĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура Желябов ячĕпе тăракан совхоз малти вырăнсенчен пĕрне йышăннă.

Асăннă совхозри К. Максимова доярка хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 5.150-шар литр сĕт суса илнĕ, кăçал вăл 5.300-шер литр суса илме сăмах парать. М. Маськова («12 лет Октября» колхоз), Е. Егорова («Ол-эрямо» колхоз), Е. Пожарская («Путь Ильича» колхоз), çавăн пекех ытти нумай дояркăсем хăйсене çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 2.500-шер литр сĕт суса илнĕ.

Таварлă продукцие ӳстерсе пырассишĕн, çĕршывăн апат-çимĕç тата чĕртавар ресурсĕсене ытларах тăвассишĕн тăрăшса, ытти вылăхсене пăхакансем те пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Ладски районĕнчи «Путь Ильича» колхозра Е. Нараев чабан 1951 çулта кашни 100 сурăхран 210 путек, кашни сурăхран 3,4 килограмм çăм илнĕ. Краснослободски районĕнчи «Красный пахарь» колхозăн аслă чабанĕ Козеняшев юлташ кашни сурăхран илекен çăм тухăçлăхне пилĕк килограмма çитернĕ.

Пĕлтĕр республикăри машина-трактор станцисем те хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç. Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 172,7 процент, комбайнпа тырпул пухса кĕртмелли плана 107 процент тултарнă. 1950 çулхипе танлаштарсан, тракторсемпе тунă ĕç калăпăшĕ 30,8 процент ӳснĕ. Вăтам шутпа кашни условнăй трактор пуçне республикăра 505 гектар, Ардатов МТС-ĕнче 778 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Хамăр Тăван çĕршыва малалла тĕреклетессишĕн тăрăшса, Мордва республикинчи ялхуçалăх ĕçченĕсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли пур обязательствăсене те иртнĕ çулта срокчен пурнăçларĕç.

Çитĕнӳсем пур пулсан та пирĕн республика, пĕтĕмĕшпе илсен, ялхуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе юлса пырать-ха.

Эпир юлса пынин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл—çĕрĕç культури пысăк марри пулать. Эпир колхозсен, МТС-сен тата совхозсен вырăнти материально-техническиски ресурсĕсемпе, ĕç резервисемпе çителĕксĕр усă куратпăр.

Общественлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе вылăх апачĕн çирĕп никĕсне çителĕклĕ таран туса хуманни чăрмантарать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ Мордва республикинчи ĕçсыннисем умне пысăк задача лартрĕ: кашни гектартан пухса кĕртекен тырпул тухăçлăхне çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче вăтам шутпа республикипе 18 центнертан кая мар çитермелле, кашни гектартан 18—20 центнертан кая мар тулă туса илмелле, кашни гектартан 8—10 центнер кантăр сӳсĕ, 16 центнертан кая мар махорка пухса кĕртмелле; кашни ĕнерен 2.500-шер литртан кая мар сĕт, кашни сурăхран 3,5 килограмран кая мар çăм илмелле.

Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, МТС тата совхоз работникĕсем хăйсен мĕнпур вăйне ялхуçалăхĕнче юлса пынине кăçалах пĕтерме мобилизацилеççĕ. Вĕсем сирĕн республикăри колхозниксемпе, МТС тата совхоз работникĕсемпе социализмлă ăмăртăва тухма кăмăл тăваççĕ.

Чăваш республикипе социализмлă ăмăртăва тухса, пирĕн республикăри колхозниксем, МТС тата совхоз работникĕсем çакăн пек обязательствăсем илеççĕ.

Уй-хир ĕçĕсем тĕлĕшпе: мĕнпур акакан çĕр лаптăкĕнчен кашни гектар пуçне 90 пăтран кая мар тĕштырă, çав шутран 95 пăт ыраш, 90 пăт çурхи тулă пухса кĕртмелле, 65 пăт вир, 50 пăт хуратул, 30 пăт кантăр сӳсĕ, 90 пăт махорка, 750 пăт çĕрулми, 1.200 пăт сахăр кăшманĕ тата тымарçимĕç туса илмелле.

Уйрăм районсем пысăкрах обязательствăсем илеççĕ. Акă Козловски, Ичалковски тата Ардатов районĕсем акнă мĕнпур лаптăкран кашни гектартан 105-шер пăт ыраш пухса кĕртме сăмах параççĕ. Старо-Шайговски, Ромодановски районĕсенчи тырпул ăстисем кашни гектартан 108-шар пăт çурхи тулă туса илме пулаççĕ. Кочкуровски, Атяшево, Ромодановски, Старо-Шайговски тата Ардатов районĕсенчи кантăр акса тăвакансем кашни гектартан 30 пăт кантăр вăрри, 42 пăт кантăр сӳсĕ туса илме шутлаççĕ.

Ромодановски, Ладски тата Козловски районĕсенчи махорка ăстисем кашни гектартан 120-шер пăт махорка пухса кĕртме сăмах параççĕ.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе: общественлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур вылăхсем тата кайăк-кĕшĕк енĕпе те чылай ирттерсе тултармалла, 1952 çулта колхозсенче лашасен шутне 5 процентран кая мар, ĕнесен шутне—20 процент, сыснасен шутне—38 процент, кайăк-кĕшĕк шутне—85 процент ӳстермелле. Колхозсенче кашни ĕнерен 1.700 литртан кая мар сĕт, кашни сурăхран вăтам шутпа виçĕ килограмм çăм, кашни чăхран 75 çăмарта илмелле. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем кашни 100 ама вылăхран 95 пăру, 120 путек, 65 тиха, кашни сысна аминчен 12 çура илсе пăхса ӳстерме пулаççĕ.

Вылăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хурас тесе колхозсемпе совхозсенче вылăх апачĕ валли каякан культурăсем акакан çĕр лаптăкне кăçал 75 пин гектара çитермелле, силос культурисен тата тымарçимĕçсен тухăçлăхне нумай ӳстерме пăхнă.

Республикăри вылăх пăхакансем хальхи вăхăтра вылăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарассишĕн кĕрешеççĕ, вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса усрама социализмлă обязательствăсем илеççĕ, вĕсем вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ. Сăмахран, Инсарово районĕнчи «Молот» колхозри ĕне сăвакан Кудряшов юлташ хăйне çирĕплетсе панă 10 ĕнерен январьте кашниинчен вăтам шутпа кунне 16-шар литр сĕт суса илнĕ, декабрьтипе танлаштарсан, кашни кун суса илекен сĕт тухăçлăхне 11 литр ӳстернĕ. Кудряшов юлташ 1952 çулта кашни ĕнерен 4.800-шер литр сĕт суса илме сăмах парать.

Машина-трактор станцисен работникĕсем машинăсемпе усă курассипе лайăхлатма, тракторсемпе тумалли ĕçсен государство планне кашни МТС тăрăх пĕтĕмĕшпех тултарма, тырпул тухăçлăхне ӳстерме паракан задание пурнăçлама сăмах параççĕ. Вĕсем çапла йышăнаççĕ: сменăри нормăсене, талăкри заданисене кашни трактористăн тултармалла, кашни 15 лаша вăйлă трактора [illegible] кая мар сухаланă чухлĕ ĕç туса, [illegible] комбайна 350 гектар тырпул пухса кĕртмелле.

Социализмлă обязательствăсем йышăнса, эпир колхоз производствине совет агробиологи наукин çитĕнĕвĕсене, ялхуçалăхĕнче малта пыраканĕсен опытне анлăн кĕртсе пыма пулатпăр.

Ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕп задачăна—мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне пĕрмай ӳстерсе пырас, общественлă вылăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне чылай ӳстерес задачăна ăнăçлăн татса парас тесе, мĕнпур колхозсенче, МТС-сенче, совхозсенче, уй-хир тата трактор бригадисенче социализмлă ăмăртăва вăйлатса пыратпăр.

Эпĕ çакна шанса тăратăп: тăванла Чăваш тата Мордва республикисенчи колхозсем хушшинчи социализмлă ăмăрту ялхуçалăхне малалла аталантарса пыма пулăшĕ, коммунизм строительствинче пире çĕнĕ çитĕнӳсем тума май парĕ.

Ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешетпĕр

П. АНИСИМОВ,
Мордва АССР-ĕнчи Ардатов районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ

Юлташсем! Мордва республикинчен килнĕ делегаци ячĕпе тата Ардатов районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен ячĕпе эпĕ сире хĕрӳллĕ салам калатăп.

Пирĕн колхоз 1951 çулта мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстермелли плана тултарчĕ. Чылай культурăсен тухăçлăхĕ планра кăтартнинчен пысăкрах пулчĕ. Колхозра наукăн çитĕнĕвĕсене тата малта пыраканĕсен опытне пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Çакна пула колхоз çĕрĕ çинче ялан пысăк тухăçлă тырпул çитĕнет. 1947 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 14,7 центнер тĕштырă туса илнĕ пулсан, 1951 çулта тырпул тухăçлăхĕ 18,9 центнера çитиччен ӳсрĕ.

1947 çул тĕлне эпир вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе вăрçăченхи шая çитрĕмĕр. СССР Верховнăй Совет Президиумĕ пирĕн колхоз членĕсене 1947 çулта пысăк тухăçлă тĕштырă туса илнĕшĕн 46 çынна Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсем парса наградăларĕ, артелĕн икĕ членĕ Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Çавăн хыççăн колхозниксем вăйлă тырпулшăн тата ытларах вăй хурса кĕрешме тытăнчĕç. Çĕнĕрен вылăх апачĕ хатĕрлемелли 9 уйлă пусă çаврăнăшĕ йĕркелерĕмĕр. Уй-хире шăрăхран хӳтĕлемелли вăрман тăрăхĕсем тăвас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлетпĕр. Вăрман лартмалли плана пĕтĕмĕшпех тултартăмăр.

Пирĕн колхозра ĕçлекен трактор бригади МТС колхозпа тунă договора кăтартулла пурнăçлать. Çуртрисене кĕрхи сĕртме тунă вырăна кăна акатпăр. Сĕртме тата кĕрхи сĕртме тунă чухне предплужниклă плугсемпе 22—27 сантиметр тарăнăш сухалатпăр.

Пирĕн ялхуçалăх артелĕ—вăрлăх тăвакан хуçалăх, вăл Ардатов районĕнчи пур колхозсем валли те чи лайăх сортлă тырăсен вăрлăхне хатĕрлесе парать.

Эпир сортлă вăрлăх пахалăхне ӳстерес шутпа ялхуçалăх культурисен агротехникине лайăх пурнăçлатпăр, агрономи наукин çитĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртетпĕр. 1951 çулта Афанасьев юлташ ертсе пыракан бригада çурхи тулла кĕрхи сĕртме тунă вырăна, вăрлăха пĕрчĕлетнĕ удобренисемпе хутăштарса акса хăварчĕ, калчасене апат пачĕ. Çакна пула кашни гектартан 20-шер центнер тулă пухса илнĕ. Çурхи тулла нумай çул ӳсекен курăксем хыççăн акнă.

Пирĕн колхоз общественлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пур вылăх енĕпе те ăнăçлă тултарчĕ. Колхоз фермисенче халĕ 300 пуç ытла ĕне вылăх, 100 сысна, 430 сурăх, 800 пуç ытла кайăк-кĕшĕк пур. 1951 çулта кашни сысна аминчен 18,9 çура илнĕ. Коренкова свинарка кашни сысна аминчен 20-шер çура пăхса ӳстерчĕ. Коренков юлташ хăйне пăхма уйăрса панă 100 сурăхран 160 путек илсе çитĕнтерчĕ. Кашни сурăхран виçшер килограмм çăм касса илнĕ. Пирĕн колхозра кашни ĕнерен 2.000-шер литр сĕт суса илеççĕ.

Кăçал пирĕн колхозниксем пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинче вăтам шутпа кашни гектартан 120-шер пăт тĕштырă, ырашпа тулă—150-шар пăт, кантăр вăрри—48-шар пăт туса илме, кашни ĕнерен пĕрер пăру пăхса ӳстерме, 2.500-шер литр сĕт суса илме, кашни 100 сурăхран 180 путекрен кая мар пăхса ӳстерме, кашни сурăхран 3,5 килограмм çăм илме пулчĕç.

Çак обязательствăсене илсе, пирĕн артель членĕсем Чăваш республикинчи пĕр колхозпа ăмăртса ĕçлеме йышăнчĕç. Хамăрăн колхозниксен кăмăлне пурнăçласа, эпĕ Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоза социализмлă ăмăртса ĕçлеме чĕнетĕп.

Çĕнĕ ăратлă сыснасем ĕрчетер

Г. КУЗЬМИНСКАЯ,
Вырăнти лайăхлатнă сыснасене ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен Çĕрпӳри госплемрассадник директорĕ

Сыснасен йывăрăшне ӳстерес, вĕсене хăвăртрах ĕрчетес тата çитĕнтерес тесен, чи малтанах вылăх апачĕн никĕсне çирĕплетмелле, вылăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ çурт-йĕр лартмалла, кадрсем улшăнса тăнине пĕтермелле. Çак условисене тусан сыснасен пахалăхĕ те нумай лайăхланать.

Пирĕн республикăри нумай колхозсенче Чăвашсен государство селекци станцийĕ ĕрчетсе кăларнă çĕнĕ ăратлă ушкăнти сыснасене нумай усраççĕ. Çак ăратлă ушкăнти сысна амисем станцире те, колхозсенче те вăтам шутпа пĕрре çурланă чухне 11—12 çура тăваççĕ, хăшпĕр амасем вара 15—18 çура таран çурлаççĕ. Сысна амисем вăтам шутпа 200—220 килограмм таяççĕ. Уйрăм амасен йывăрăшĕ 270—300 килограмм таран, аçа сыснасен йывăрăшĕ—300—350 килограма çитет. «Литой №143» сысна аçи, икĕ çулта чухне самăртма хупнăскер, 23 пăт тайнă. Çак сысна аçине пуссан сало кăна 12 пăт тухнă. «Литой» сыснапа 766 килограмм аш-какай вырăнне йышăннă.

Шултра сыснасем, яланхи пĕчĕк сыснасемпе танлаштарсан, 20—30 процент ытларах çес апат çиеççĕ, анчах ашĕ вĕсентемиçе хут ытларах тухать, пахалăхĕ те лайăх.

Сыснасен тухăçлăхне ӳстерме эпир селекци станцийĕнче вĕсене тĕрлĕ йышши апатпа тăрантаратпăр, сысна амисене шултра йышши шурă ăратлă чи лайăх сысна аçисемпе чуптаратпăр. Ăратлă валли чи лайăх çурасене кăна суйласа илнĕ, вĕсене лайăх апатпа тăрантарса ӳстернĕ. Çакă вăл пиĕ кирлĕ.

Ĕнерен сĕт нумай суса илес, сысна йывăрăшне ӳстерес тесен, вылăх-чĕрлĕх валли концентратлă апатсем питĕ нумай кирлех те мар. Вылăх-чĕрлĕхе паракан апат шутĕнче утă тата сĕтеклĕ апатсем, курăксем, силос, кăшман тата çĕрулми пулни питĕ кирлĕ. Вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес ĕçре лайăх утăпа сĕтеклĕ апатсем мĕнле пысăк вырăн йышăннине Чăвашсен государство селекци станцийĕн ĕçĕнчи опытран лайăх курăнать. 1947 çулта утă курăк акмалли çĕрĕç системине йĕркелемен пулнă. Вăл çул селекци станцийĕ сĕтеклĕ апатсем 70 тонна кăна пухса илнĕ. Çав çул вăтам шутпа кашни ĕнерен 1.300 литртан ытла сĕт суса илмен, сыснасен йывăрăшĕ—120 килограмран иртмен. 1948 çулта, курăк акмалли пусă çаврăнăшĕсене йĕркелессе çитернĕ май, селекци станцийĕ 40 тонна утă, 240 тонна сĕтеклĕ апатсем пухса кĕртнĕ. Ку çул кашни ĕнерен 2.730-шар литр сĕт суса илнĕ, сыснасен йывăрăшĕ 180 килограма çитнĕ. 1951 çулта селекци станцийĕ 300 тонна утă тата 400 тонна сĕтеклĕ апатсем хатĕрленĕ, вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне нумай ӳстернĕ. Кашни ĕнерен 3.671-шер литр сĕт суса илнĕ, сыснасен йывăрăшĕ вăтам шутпа 280 килограма çитнĕ.

Вылăх апачĕ тулăх пулнă май, Чăвашсен государство селекци станцийĕ коллективĕ хăюллăнах 1952 çулта кашни ĕнерен 4.000-шер литр сĕт суса илме, кашни сысна аминчен 22 çура илме обязательство илчĕ.

Хальхи хĕллехи кунсенче унта сыснасене 2,5-шер килограмм утă е арпа параççĕ. Çулла та вĕсене 5—7-шер килограмм курăк çулса çитереççĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозра та кашни ĕнене кунне 15—20 килограмм силос тата 15—20 килограмм кăшман çитереççĕ. Унта та вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ ӳссе пырать.

Акă тата тепĕр тĕслĕх. Çĕрпӳ районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче çуллахи вăхăтра çахал мар силос хывнă, 250 тонна вылăх кăшман туса илнĕ, халĕ вĕсене вылăх-чĕрлĕх çитереççĕ. Кунта вара кулленех кашни ĕнерен 8—9-шар литр сĕт суса илеççĕ. Çакна çирĕппĕн ĕненме пулать: çуллахи вăхăтра ĕнесене тăрантарассине лайăх йĕркелесен, çак артельти дояркăсем кашни ĕнерен 18-шар литр таран сĕт суса илме çăмăллăнах пултарассĕ.

Çĕнĕ ăратлă ушкăнти сыснасем лайăх пулнине шута илсе, ЧАССР Министрĕсен Совечĕ вырăнта лайăхлатнă сыснасене ĕрчетме государствăн племенной рассадникне организацилеме йышăнчĕ. Çак сыснасене Çĕрпӳ, Чурачăк тата Красноармейски районĕсенче чылай колхозсенче ытти артельсем валли ĕрчетмелле. Халĕ селекци станципе лайăхлатнă сыснасене çав районсенче ытларах усраççĕ. Кăçал çакăн пек задача тăрать: госплемрассадник зонинчи колхозсенче кашни сысна аминчен 14-шар çура ăратлăх пăхса ӳстермелле. Çапла вара 3.000 çура пăхса çитĕнтермелле.

Çĕрпӳри селекци станцийĕнче ĕрчетнĕ çĕнĕ ăратлă ушкăнти сыснасене хамăр республикăри колхозсем çеç мар, Мари республикинчи тата Мускав облаçĕнчи колхозсем те ытаççĕ.

Лайăхлатнă сыснасене ĕрчетме тата вĕсен шутне ӳстерме лайăх условисем тумалла, вылăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлемелле, пысăк тупăш паракан сыснасене ĕрчетмелле. Çапла тусан, сысна фермисем паракан тупăш хăвăрт ӳссе пырĕ.

ВĂРМАН ПРОМЫШЛЕННОÇĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫТНЕ АНЛĂ САРАР!

Сысуйкин меслечĕпе ĕçлесе

Н. Вильдяев юлташ докладĕнчен

1947 çулхи май уйăхĕнче Алтышево вăрманпромхозне лавçă пулса ĕçлеме кĕтĕм. Эпĕ ĕç нормине йăнăçлă тултарса пыраттăм. Виç-тăватă çул каялла вăрманпромхоза электропăчкăсем, ЗИС-21 автомашинăсемпе хăватлă тракторсем йышлăн килме тытăнчĕç. Совет машиностроителĕсем туса кăларнă ăслă, вăйлă механизмсем мана кăмăла кайрĕç.

— Лашапа ĕçлесси мĕн вăл, машинăна çÿреме вĕренесчĕ,—час-часах шухăшлаттăм ун чухне.

1950 çулхи февраль уйăхĕнче мана директор патне чĕнсе илчĕç те тракториста вĕренмелли курса кайма сĕнчĕç. Кунпа çав тери хĕпĕртерĕм.

1950 çулхи май уйăхĕнче Сĕнтĕрвăрри вăрман техникумĕ çумĕнчи курсран вĕренсе тухнă хыççăн, тракторист помощникĕ пулса ĕçлеме тытăнтăм. Пĕр уйăх иртсен, ĕçе хăнăхса çитнине кура, мана трактор шанса пачĕç. Пытармалли çук: малтанхи вăхăтра ĕçлеме çăмăлах марччĕ, кăткăс машина лаша пекех «итлесшĕн» марччĕ çамрăка. Сахал мар вĕренме, ытти тракторисчен меслечĕпе паллашма тиврĕ. Уйрăмах Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, Кире вăрманпромхозĕнче ĕçлекен паллă тракторист Михаил Николаевич Сысуйкин юлташăн çитĕнĕвĕсемпе тата опычĕпе интересленме тытăнтăм, ун çинчен хаçатра çырнине, радиопа пĕлтернине е çынсем каласа панине касса кайса итлеттĕм.

Мана Михаил Николаевичăн ĕçри «секречĕсене» куçпа курма тÿрĕ тивмерĕ. 1951 çулхи август уйăхĕнче Кире вăрманпромхозĕнче паллă стахановец опытне вĕренме ятарласа семинар организациленĕ. Çав семинарта пирĕн вăрманпромхозра ĕçлекен Халахин трактористпа Чернышев инженер пулнă. Семинартан таврăнсан вĕсем Сысуйкин юлташăн паха тĕслĕхĕсем çинчен тĕплĕ каласа пачĕç. Çавăнтанпа çĕнĕлле ĕçлеме тытăнтăм.

1951 çулхи октябрь уйăхĕнче эпĕ, бригада членĕсемпе сÿтсе явнă хыççăн, кĕркуннеце хĕллехи сезонта 10 пин кубометр йывăç сул хĕррине илсе тухма йышăнтăм. Техникăллă йĕркесем тăрăх, трактора тĕпрен юсамаллаччĕ. Апла пулин те пысăк обязательство илме хăрамарăм. Электропăчкăпа йывăç касса хатĕрлекен, пĕренесене сыпăлакан рабочисем те тухăçлă ĕçлеме сăмах пачĕç. 77 кун хушшинче 6.153 кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухрăм, урăхла каласан, сменăри задание вăтам шутпа 160 процент тултартăм. Çак çитĕнĕве, паллах, бригадăри рабочисем пурсăмарта тăрăшса тата килĕштерсе ĕçленипе тунă.

Мĕнле хĕрÿллĕ тапхăр пулсан та трактора юсамалли графика пăсмастпăр. 50 сехет ĕçленĕ хыççăн ăна тĕплĕ тишкерсе тухатпăр, вак-тĕвек ситменлĕхсене пĕтеретпĕр. Трактора тĕрĕслесе тухнă хыççăн çеç ĕçе тытăнатпăр, пĕчĕк кăлтăк пулсан та, ăна юсамасăр çула тухмастпăр.

КТ-12 трактора ĕçлеттермелли инструкци—пирĕншĕн çирĕп закон. М. Сысуйкин юлташ пекех мотора, газпа ĕçлекенскере, сÿнтерес умĕн бензин çине куçаратпăр. Бригадăри пĕрене сыпăласа купалакан рабочисем ирех тухăçлă ĕçлеме пултаччăр тесе, смена вĕçленес умĕн, 3—4 хут хутласа, тепĕр кун валли йывăç кăларса хуратпăр. Ирхине, вăрмана çитсен, помощникпа чокеровщик, газогенератора ĕçе ярса, двигателе подогревательпе ăшăтаççĕ. Çав вăхăтра эпĕ трактора пăхса тухатăп, юсамаллине юсатăп. 30—40 минутран трактор ĕçлеме хатĕр пулать.

Трактор йăнăçлă ĕçлесси, чуркăсем типĕ пулнинчен сахал мар килет. Чурка хатĕрлекен база эпир ĕçлекен вырăнтан 5—10 километрта. Юрпа вараланса е ытти сăлтавпа ан чÿрленччĕр тесе чуркăсене ятарласа тунă будкăра усратпăр. Çав будкăна тракторпа хамăр ĕçленĕ çĕре куçаратпăр. Бункера кашни сехетре чурка ярса тăратпăр.

Пĕренесене пĕр склада çеç турттарсан, рабочисем сыпăласа купалама ĕлкĕреймеппине пысăк купасем пулаççĕ, ĕçлеме кансĕрлеççĕ. Апла тăвас мар тесе пĕренесене икĕ склада турттарса пыратпăр.

Машинăна тухăçлă ĕçлеттересси йывăçсене пĕлсе касса йăвантарнинчен, тункатасем 5 сантиметртан çÿлĕ мар пулнинчен нумай килет. Бригада членĕсем—йывăç касса йăвантаракансем, сыпăлакансем, купалакансем, трактористпа помощник—пурте пĕр-пĕринпе килĕштерсе, пĕр-пĕрне пулăшса пырсан çеç тухăçлă ĕçлеме пулать.

Электропăчкăпа ĕçлекен Б. Игнатьев, П. Серебряков, П. Баштанов юлташсем технологи дисциплинине çирĕп сыхлаççĕ, йывăçсене тракторпа турттарса кăларма майлă йăвантарса яраççĕ. В. Куклев юлташ ертсе пыракан пĕрене сыпăлакан тата купалакан звено пур ĕçе те хăвăрт, пысăк пахалăхпа тăвать, тракторпа тухăçлă ĕçлеме чăрмантармасть.

Эпĕ тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармастăп, хамăн опытпа ыттисене паллаштаратăп, çамрăксене вĕрентетĕп. Халĕ звенора тракторист-стажерсем пур. Вĕсем мана нумай пулăшаççĕ, çав вăхăтрах манран вĕренеççĕ. Эпĕ хам мĕн пĕлнине вĕсенчен пытармастăп, тулли кăмăлпа каласа ăнлантаратăп е кăтартса паратăп.

Пирĕн ĕçре ситменлĕхсемпе чăрмавсем те сахал мар-ха. Трактора юсама запаслă пайсем пулманнипе тăватă уйăх хушшинче 26 кун ĕçлеймерĕмĕр. Çав вăхăтра сахалтан та 2 пин кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухма пулатчĕ.

Тепĕр ситменлĕх вăл—пĕр кварталтан тепĕр квартала час-часах куçса çÿреме тивни пулать. Пĕр кварталта 10—15 кун ĕçлетпĕр. Пĕр çĕрте ытларах ĕçленĕ чухне сменăра çĕршер кубометр е ытларах та турттаратпăр. Час-часах уйăрса панă участока ĕçлесе пĕтернипе 4—5 кун ĕçленĕ хыççăнах тепĕр квартала куçма тивет.

Февралĕн 4-мĕшĕнче çĕнĕ тракторпа ĕçлеме тытăнтăмăр. Эпир ăна лайăх пăхса усрама, унăн ĕмĕрне тăсма социализмла обязательство йышăнтăмăр. Çичĕ кун хушшинче 850 фестметр, кашни сменăра вăтам шутпа 121 фестметр çул хĕррине илсе кăларса, ĕç нормине 245 процент тултартăмăр.

Тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармалла мар, çĕнĕрен те çĕнĕ ĕç меслечĕсем тупмалла, тухăçлăрах ĕçлемелле, тесĕ вĕрентет пире большевиксен партийĕ. Наукăпа техника хăвăрт аталанаççĕ, рабочисен пуçарулăхĕне пултарулăхĕ, опычĕ пĕрмай ÿсет. Механизмсене тата лайăхрах ĕçлеттересси новаторсен опытне анлă сарнинчен, хамăрăн техникăлла пĕлĕве, тавракурăма тăтăш ÿстернинчен, рабочисемпе инженерсем хушшинчи туслăха çирĕплетнинчен килет.

«Чăвашвăрман» трест специалисчĕсемпе профсоюз обкомĕ малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерме тăрăшмаççĕ. Кĕркуннепе хĕллехи сезон пуçланнăранпа пирĕн пата трестран, профсоюз обкомĕнчен пĕр специалист та пыман.

Партипе правительство вăрман промышленноçне малалла аталантарассине пысăка хураççĕ, ăна плана тултарма мĕн кирлине пурне те параççĕ. Коммунизм строительствин программи, партипе правительство пирĕншĕн, рядовой рабочисемшĕн, сталинла тăрăшнă çĕнĕ, иксĕлми вăй-хăват парать.

Çак кунсенче Чăвашоблпрофсовет президиумĕ тата вăрман промышленность работникĕсен профсоюз обкомĕ паллă механизаторсен Ф. Тырлышкин, Н. Вильдяев тата П. Егоров юлташсен доклачĕсене сÿтсе яврĕç. Производство новаторĕсем хăйсен опычĕпе меслечĕ çинчен тĕплĕ каласа пачĕç тата тухăçлăрах ĕçлемелли резервсене палăртрĕç, стахановла юхăма вăйлатмалли сĕнÿсем пачĕç.

Чăвашоблпрофсовет президиумĕпе вăрман промышленность работникĕсен профсоюз обкомĕ Ф. Тырлышкин, Н. Вильдяев тата П. Егоров юлташсем пысăк çитĕнÿсем тунине палăртрĕç, вĕсен опычĕпе меслетне анлă сарма пулăшакан решенисем йышăнчĕç.

Пирĕн хаçат, новаторсен ĕçĕпе вăрман промышленноçĕнчи ытти механизаторсене паллаштарас шутпа, Ф. Тырлышкин, Н. Вильдяев тата П. Егоров юлташсем асăннă ларусенче тунă докладсене кĕскен пичетлет.

Поток—ĕç тухăçлăхне ÿстермелли меслет

Улатăр вăрманпромхозĕнчи бригадир Ф. Тырлышкин юлташ докладĕнчен

Вăрман промышленноçĕ çултан-çул çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Пур механизмсемпе те тулли усă курасси техникăна пĕлекен кадрсенчен тата ĕçе тĕрĕс, пĕлсе организацилеринчен килет. Опыт çакна кăтартать: хăшпĕр участоксенче электропăчкăсемпе лайăх усă кураççĕ, çав вăхăтрах автомашинăсем е тракторсем час-часах ахаль лараççĕ, тепĕр çĕрте — пачах урăхла пулать.

Пирĕн вăрманпромхозра чылайранпа электропăчкăсемпе тулли усă кураççĕ. Пĕлтĕр эпир касса хатĕрлекен йывăçа турттарса ĕлкĕрейместчĕç. Вăхăтра турттарса кăлармасан пĕренесем сурккаланса пăсăлаççĕ, строительство организацийĕсемпе предприятисем хăйсене кирлĕ материала вăхăтра илеймеççĕ, кунсăр пуçне оборотри укçа-тенкĕ çаврăнăшĕ чакать.

Механизмсемпе пĕтĕмĕшпе лайăх усă курас, чугун çул станцийĕнчен е пристаньрен 20—30 километрта касса хатĕрленĕ йывăçа çав кунах ăсатмалла тăвас тесен, ĕçе мĕнле йĕркелемелли стахановецсене хытă интереслентеретчĕ. Иртнĕ кĕркунне эпĕ йывăç касса хатĕрлес, касна йывăçа çул хĕррине илсе тухас тата купалас ĕçе поток меслечĕпе туса пырас, ĕçе çавăн пек йĕркелес тесе комплекслă бригада тума сĕнтĕм.

Бригадăна çакăн пек организацилерĕмĕр: пĕр рабочи электропăчкăпа йывăçсене касса йăвантарать, теприи—сыпăлать, тăваттăн туратсене касса иртеççĕ тата çунтараççĕ, 2 тракторист, икĕ моторист помощникĕ тата икĕ чокеровщик çул хĕррине илсе тухаççĕ. Пĕр рабочи çула майласа тăрать. Кам мĕнле ĕç тăвасси условисене кура улшăнма пултарать: турат иртме е пĕренесене сыпăлама ĕлкĕреймесен, ыттисем пулăшаççĕ. Çĕнĕ кварталта ĕçлеме тытăниччен ăна мастерпа тата техноруклпа пăхса тухатпăр, пĕренесене купалама тата турттарса кăларма майлă вырăнсем палăртатпăр, йывăçсене касмалли йĕрке тăватпăр.

Ĕçе тухиччен электропăчкăсене тата ытти инструментсене лайăх юсаса йĕркелетпĕр. Вăрмана çитсен вара пурте ĕçе пикенсе тытăнатпăр. Пĕр пасекăра йывăçсене касса йăвантарнă чухне турат иртсе çунтаракансем тата тракторпа 50 метртă вырнаçнă урăх пасекăра ĕçлеççĕ. Норма тăрăх сменăра 100 кубометр касса йăвантармалла пулсан, куллен 150—160 кубометр касса йăвантаратпăр. Çав вăхăтрах эпĕ ытти звеносем мĕнле ĕçленине сăнаса тăратăп, ĕçри ситменлĕхсене пĕтеретĕп, юлса пыракансене пулăшатăп. Тепĕр сменăри турат касса иртекенсем ĕçе вăхăтра тытăнма пултарччăр тесе, смена пĕтиччен йывăç нормăран ытларах касса йăвантаратпăр. Пасекăри йывăçсене касса йăвантарса пĕтерсен, тепĕр пасекăна куçатпăр, пирĕн вырăна туратсене иртекен рабочисемпе тракторпстсем пыраççĕ. Механизмсене икĕ сменăна ĕçлеттереççĕ.

Норма тăрăх бригадăри кашни рабочи пуçне куллен вăтам шутпа 3,6-шар фестметр йывăç хатĕрлемелле пулсан, 5,4-шер фестметр хатĕрлетпĕр. Кĕркуннепе хĕллехи сезонта бригадăн 8.7 пин фестметр хатĕрлемелле, вăл 11,5 пин фестметр хатĕрлеме социализмлă обязательство йышăнчĕ. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне 7.800 фестметр хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

Çĕршыври малта пыракан вăрманпромхозсенче сехетри график тăрăх ĕçлесçĕ. «Чăвашвăрман» трестпа вăрманпромхоз дирекцийĕ пулăшсан бригада та сехетри график тăрăх ĕçлеме пултарать. Вăрманпромхоз дирекцийĕ бригадăна механизмсем юсама запаслă пайсем ситеклĕ уйăрса паманни, кварталсене касма вăхăтра хатĕрлеменни ĕçре сахал мар кансĕрлеççĕ.

Вăрман участокĕнче поток меслечĕпе ĕçлекен комплекслă бригадăсем пурĕ тăваттă. Вĕсем пурте тухăçлă ĕçлеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): Вăрнар вăрманпромхозĕнчи стахановец-шофер П. Егоров юлташ, Алтышево вăрманпромхозĕнчи паллă тракторист-трелевщик Н. Вильдяев юлташ тата Улатăр вăрманпромхозĕнчи бригадир Ф. Тырлышкин юлташ.

В. Перубенкопа Г. Зиньков фотоÿкерчĕкĕ.

Стахановла ĕçлеме вĕрентетĕп

Вăрнар вăрманпромхозĕнче ĕçлекен П. Егоров юлташ докладĕнчен

Шофер пулса 1937 çултанпа ĕçлетĕп. 1951 çулта, ЗИС-21 машинăпа 3.804 фестметр йывăç турттарса кăларса, çулталăкри ĕç нормине 186 процент тултартăм. Иртнĕ çулхи задание 1-мĕш кварталтах пурнăçларăм. Апрельпе май уйăхĕсенче çул япăххипе ĕçлеймерĕмĕр. Виççĕмĕш кварталта икĕ уйăх отпускра пултăм. IV-мĕш кварталта 335 фестметр вырăнне 850 фестметр турттарса кălартăм.

— Мĕнле майпа çавăн пек пысăк çитĕнÿ тăватăр,—час-часах ыйтаççĕ манран юлташсем. Нимĕн тĕлĕнмелли те çук, кашни шофер ман пек ĕçлеме пултарать. Çитĕнÿ тăвасси юратса, тÿрĕ кăмăлпа, тăрăшса ĕçленинчен килет. Манăн уйрăм меслет çук. Эпĕ машинăна лайăх пăхса усрама, ăна ĕçре, сул çинче ытларах тытма тăрăшатăп. Çанталăка, çула тата вырăна кура тĕрлĕ майпа ĕçлетĕп. Нихçан та ытлашши тиеттерместĕп.

Эпĕ ĕçлекен машина çĕнĕ мар, 55 пин километр çÿренĕ. Апла пулин те ăна тĕпрен юсаман, моторĕ те киввиех. Унпа сулăччен çÿреме пулать. 1951 çулта машина пурĕ 28 кун юсавра пулнă. Машинăн пĕчĕк ситменлĕхĕсене гаража кĕртмесĕр, пĕренесене тиесе пушатнă чухне юсатпăр. Иртнĕ хĕлле пурĕ 9 кун хушшинче çеç ăна гаражра юсанă.

Механизмсем юсавлă пулсан, вĕсен ĕмĕрне тăсасси тĕрлĕ сменăсенчи рабочисем килĕштерсе ĕçленинчен, машинăсене тулли кăмăлпа пăхса упранинчен килет. Пĕлтĕр эпĕ хамăн ывăлăм Борниспа йывăç турттартăм: вăл пĕр сменăра, эпĕ—тепĕр сменăра ĕçлерĕмĕр. Вăл та машинăна юрататчĕ, стахановла ĕçлетчĕ, машина ăмăртатчĕ. Вăл ноябрь уйăхĕччен (Совет Çарне тухса кайиччен) 3.116 фестметр йывăç турттарса кăларса, çулталăкри задание чылай иртерсе тултарчĕ. Иксĕмĕр пĕр машинăпа 6.920 фестметр турттарса кăлартăмăр, çулталăкри ĕç нормине 169 процент тултартăмăр.

Ĕçе çапла йĕркеленĕччĕ: çĕрле машинăна юсама кансĕр, курăнмасть. Çавăнпа ăна кăнтăрла ĕçлекен тĕплĕ пăхса тухса юсатчĕ, çĕрле ĕçлекене юсавлă, шанчăклă машина паратчĕ. Уйрăмах газогенераторлă автомашинăна кăнтăрла юсанин пĕлтерĕшĕ пысăк. Ывăлăм ман валли, эпĕ—ун валли машинăна мĕн пĕлнĕ таран лайăх юсама тăрăшаттăмăр.

Машина çине, уйрăмах хĕлле, прицепа турттарнă чухне, сăртсене, çул пахалăхне шута илсе тиеттермелле. Ытлашши нумай тиеттернипе ĕç тухăçлăхне ÿстерме çук. Виçеллĕ тиесен сăртсене хăпарнă чухне мотор хĕрмест.

Пĕлтĕрхи 1-мĕш кварталта кашни рейсра вăтам шутпа 12-шер фестметр, хăшпĕр чухне—13 фестметр ытла турттарса тухнă.

Машинăна çÿретме пĕлни кирлĕ. Шоферăн ĕçе тытăниччен çулпа паллашмалла. Вырăнтан тапранпнă чухне, уйрăмах хĕлле, прицепна турттарсан, машинăна пĕр тикĕс хускатмалла, çул çинче те пĕр майлă илсе пымалла.

Эпир тата тухăçлăрах ĕçлеме пултаратпăр, анчах çулсене вăхăтра юсаманни чăрмантарать. Иртнĕ хĕлле юр сахалтараххчĕ, çулсене лайăххрах пăхса тăратчĕç, шыв сапатчĕç. Çулсене хĕле кĕричченн кирлĕ пек юсаттармарĕç, кăçал юр нумай, шыв сапмаççĕ, вăхăтра тасатмаççĕ. Çул юсама тата юр тасатма ятарласа трактор уйăрнă. Вăл йĕркеллĕ ĕçлемест, час-часах çул çинче чарăнса ларать. Çул япăх пулин те январь уйăхĕнче нормăна ăнăçлă тултартăм, ку уйăхра тухăçлăрах ĕçлетĕп.

Тепĕр ситменлĕх вăл—машина пĕрене тиесе пушатнă чухне нумай тăни. Хуть те мĕн чухлĕ машина ĕçлесен те грузчиксен йышĕ пĕр пек. Хăшпĕр чухне машинăсем капланса лараççĕ.

Малта пыракан опытпа паллаштарасси—стахановецсен йăлине кĕнĕ.

Çул çинче машина чарăнса ларнине курсан шофера тивĕçлĕ пулăшу паратăп. Стажерсене вĕрентсе ĕçе хăнăхтаратăп. Кашни çул 7—8 стажер вĕрентетĕп. Ман патăмра стажер пулнисем нумайăшĕ стахановла ĕçлеççĕ. Сăмахран, Кошкинпа Кузнецов юлташсем хăшпĕр чухне манран та пахарах тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Планран иртттерсе йывăç хатĕрлетпĕр

Вăрмар районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем вăрман хатĕрлемелли плана çуллен иртерсе тултараççĕ. Ку сезонта та вĕсем ĕçе активлă тытăнчĕç. Колхозниксем ĕçе ир тухаççĕ, вăрмантан час таврăнмаççĕ. Кашни колхозник уйрăм ĕç тăвать: пĕрисем юр тасатаççĕ, йывăçсене касса йăвантараççĕ, теприсем—туратсене иртеççĕ, татса çураççĕ, купалаççĕ. Çапла ĕçлени ĕç тухăçлăхне чылай хăпартма май парать. Звеносем хушшинче вăйлă ăмăрту пырать. М. Яковлев, Н. Сергеев, А. Кондратьева, А. Филиппова, Е. Герасимова юлташсем ĕç нормине 120—130 процент таран тултарса пычĕç. Бригада икĕ пин фестметр ытла йывăç касса хатĕрлерĕ, задание çĕнĕ çул тĕлне пурнăçларĕ.

Колхозниксем касса хатĕрленĕ йывăçа çийĕнчех турттарса кăлараççĕ. Лавçăсем ушкăнăн-ушкăнăн ĕçлеççĕ, кашни лава иккĕн-виççĕн тиесе пушатаççĕ. Çапла тупи ĕçе чылай çăмăллатать.

Лашасем ĕçре ывăнни нихçан та пулман. Вĕсемпе йĕркеллĕ ĕçлеççĕ, кашнийсем вăхăтра тăрантарса шăвараççĕ. СССР Вăрман промышленность министерствин Хисеплĕ грамотине илнĕ В. Александров комсомолец ертсе пыракан бригадăри М. Иванов, А. Нямив, Н. Григорьев лавçăсем хăйсене çирĕплетсе панă лашасемпе 18 çухрăмран Енĕшпуç станцине 0,8 фестметр вырăнне пĕр фестметр ытла йывăç турттарса кăлараççĕ. Вĕсен примерĕпе ытти лавçăсем те нормăна иртерсе тултараççĕ. Ку бригада йывăç турттармалли тата çул хĕррине илсе тухмалли плана февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ.

Эпир вăрман хатĕрлекенсемпе канашлусем час-часах иртеретпĕр, вĕсене малта пыракансен ĕç опычĕпе паллаштаратпăр. Бригадăсемпе звеносем тата уйрăм çынсем мĕнле ĕçленине кăтарту хăми çине çырса пыратпăр. Агитаторсем (вĕсем вăрманта 7 çын) стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларма пулăшаççĕ, колхозниксене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, калаçусем иртереççĕ.

Кăçалхи сезонта вăрман хатĕрлесе колхоз та, колхозниксем те пысăк тупăш пачĕç. Вăрманпромхоз колхоза 50 пин тенкĕ укçа куçарса пачĕ, колхозниксем те кашни уйăхра 600—700 тенкĕ ĕçлесе илчĕç.

Эпир сезонта йывăç хатĕрлемелли плана тултарнипе лăпланса лармастпăр. Йывăç хатĕрлемелли стахановла уйăхлăха хутшăнса, планран иртерсе 300 фестметр йывăç касса хатĕрлетпĕр, 200 фестметр турттарса кăларатпăр. Ку вăл эпир коммунизм стройкисем валли хатĕрлекен парне пулать.

В. КОНДРАТЬЕВ,
колхоз председателĕ.

Социализмлă ăмăртăва вăйлатар

Вăрман промышленноçĕ—пирĕн халăх хуçалăхĕн паллă отраслĕсенчен пĕри. Йывăç çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем, пурăнмалли çуртсем тума каять, шахтăсемпе чугун çул транспортне кирлĕ, вăл топливо та пулса тăрать. Хут ытларах туса кăларма та, кĕнеке, хаçат-журнал, учебниксем, тетрадьсем ытларах туса кăларма та пире йывăç нумай кирлĕ. Промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсене аталантарасси, капитальнăй строительство планне тултарасси вăрман хатĕрлекенсен ĕçĕнчен нумай килет.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви вăрман промышленноçне аталантарма куллен тăрăшаççĕ. Тăван çĕршыв вăрманпромхозсене хăватлă техника: йывăç турттарса кăлармалли тракторсем, электричествăпа ĕçлекен лебедкăсем, куçса çÿрекен электростанцисем, автомашинăсем, мотовозсем, электропăчкăсем тата ытти пысăк тухăçпа ĕçлекен механизмсем пачĕ.

Çĕнĕ техникăпа пула çĕнĕ профессисем çуралса тухрĕç.

Партипе правительство вăрман хатĕрлекенсене пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме лайăх условисем туса пачĕç. Партипе правительство тăрăшни çине вăрман хатĕрлекенсем стахановла ĕçпе ответлеççĕ. Производствăра малта пыракансем, инженерсемпе, техниксемпе тата наука работникĕсемпе тачă çыхăну тытса, вăрман хатĕрлес ĕçе тĕпренех лайăхлатакан, ĕç тухăçлăхне ÿстерекен майсем тупаççĕ.

Социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнса, вăрман промышленноçĕнчи нумай механизаторсем пысăк çитĕнÿсем турĕç, производствăна хăвăрт ÿстерсе пымалли майсем кăтартса пачĕç.

Чăваш республикинчи вăрман хатĕрлекен предприятисенче стахановецсем, йывăç хатĕрлес ĕç техникине алла илнĕ çынсем сахал мар палăрчĕç. Вăрман хатĕрлес ĕçре малта пыракансене: Кире вăрманпромхозĕн паллă трактористне, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне Михаил Сысуйкина, Алтышево вăрманпромхозĕнчи тракториста Николай Вильдяева, Вăрнар вăрманпромхозĕнчи Çарăклă автоçулĕ çинче ĕçлекен шофера Петр Егорова, Буинск вăрманпромхозĕнчи электропăчкă мотористне Яков Царегородцева, Иванькоьăри вăрман пунктĕнчи поточнăй майпа ĕçлекен комплекслă бригада бригадирне Федор Тырлышкина тата ытти новаторсене те Чăваш республикинче нумай çĕрте пĕлеççĕ.

Çак кунсенче Профсоюзсен Облаçри Комитечĕ Алтышево вăрманпромхозĕнчи тракторист-трелевщик Николай Вильдяевăн, Вăрнар вăрманпромхозĕнчи автоçул çинче ĕçлекен шофер Петр Егоровăн докладне сÿтсе явса, вĕсен паха опытне ырларĕ. Вăрман хатĕрлекен предприятисенчи профсоюз организацийĕсене Николай Вильдяевпа Петр Егоров шоферсен ĕç опытне анлăн сарма сĕнчĕ. Вăрманта ĕçлекен тата çулă юхтаракан рабочисен профсоюзĕн обком президиумĕ Улатăр вăрманпромхозĕнчи Иванькоьăри вăрман пунктĕнчи поточнăй майпа ĕçлекен комплекслă бригадăн ĕçри опычĕ çинчен Федор Тырлышкин юлташ докладне сÿтсе явса, çак бригада опытне вăрман хатĕрлекенсем хушшинче анлăн сарма хушрĕ. Сысуйкин, Вильдяев, Егоров, Царегородцев, Тырлышкин юлташсем ĕçе лайăх организацилеме пĕлни енчен кăна мар, хăйсене шанса панă техникăна тĕплĕ вĕренсе алла илни, машинăсемпе усă курмалли йĕркесене вĕренсе çитни, чи лайăх майсемпе ĕçлени енчен те палăрса тăраççĕ.

Новаторсен опычĕ йывăç хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăрман хатĕрлевĕнче малта пыракан стахановецсен опытне «Чăвашвăрман» тресчĕн предприятийĕсенче тата ытти вăрманпромхозсенче те анлăн сармалла.

Йывăç хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн ăмăртăва хутшăнса, вăрман промышленноçĕнчи рабочисем, колхозниксем, инженерсемпе техниксем тата служащисем механизмсемпе лайăхрах усă курма, поточнăй меслете тата ĕçе пур енĕпе те механизацилессине анлăрах пурнăçа кĕртсе пыма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме сăмах пачĕç.

Вăрманта ĕçлекен тата çулă юхтаракан рабочисен профсоюзĕн обкомĕ, вăрманпромхозсенчи рабочи комитечĕсем умĕнче пысăк ответлăх тăрать. Производствăри активлăха вăйлатса пырасси, социализмлă ăмăрту организацилесе, ăмăртакансене пулăшасси—вĕсен чи кирлĕ задачи. Вĕсен кашни рабочие ăмăртăва хутшăнма пулăшмалла, йышăннă обязательствăна пурнăçлама лайăх майсем туса памалла.

Вăрманпромхозсенчи профсоюз организацийĕсен механизмсен ĕçлес срокне ÿстерес тĕлĕшпе механизаторсен ăмăртăвне анлăн сармалла. Опыт çакна кăтартса парать: хуçалăх руководителĕсемпе профсоюз организацийĕсем çак паха ăмăртăва лайăх ертсе пынă çĕрте механизмсем пĕр чарăнмасăр, пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ, унта плана иртерсе тултараççĕ.

Хăватлă техникăпа пĕлсе усă курсан плана тултарма çеç мар, иртерсе те тултарма пулать. Предприятири техникăпа тулли усă курассишĕн пыракан социализмлă ăмăрту бригадирсене, мастерсене, инженерсемпе техниксене кашни машинăшăн тăрăшма, оборудованипе мĕнле усă курнине куллен тĕрĕслесе тăма, вĕсене хăвăрт та лайăх юсама хушать. Вăрманпромхозсемпе вăрман участокĕсен руководителĕсемпе профсоюз организацийĕсен механизмсемпе ĕçлекен тата вĕсене юсакан пур рабочисене те, пур инженерсемпе техниксене те çак ăмăртăва хутшăнтармалла.

Вăрманпромхозсен руководителĕсемпе профсоюз организацийĕсен кашни кубометр йывăçăн хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн социализмлă ăмăртăва ертсе пымалла. Чылай вăрманпромхозсенче кашни кубометр йывăçăн хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн ăмăрту пырать. Ку ăмăртăва нумай профессисем хутшăнчĕç. Сталин юлташ патне янă çырура вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсем ĕçе юрăхлă йывăç ытларах хатĕрлеме сăмах пачĕç. Вăрманта колхозниксем нумай ĕçлеççĕ. Вăрманпромхоз директорĕсемпе рабочкомсен сезонниксене ĕçлеме тата пурăнма лайăх условисем туса памалла, кадрти рабочисем сезонниксене пулăшас ĕçе организацилемелле.

Государство планне ăнăçлă тултарасси рабочисемпе колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе лайăх туса пынинчен нумай килет. Ку тĕлĕшпе предприятисенчи профсоюз организацийĕсен пысăк ĕçсем туса иртермелле.

Приволжски вăрманпромхозри рабочком массăллă-политикăллă ĕçе начар мар организациленĕ. Клубра художествăллă пултарулăх кружокĕ спектакльсем, концертсем тăтăш лартса парать, лекцисемпе докладсем пулаççĕ. Агитаторсем вăрманта ĕçлекенсем хушшинче политика, хуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх тата тĕнчери лару-тăру çинчен калаçусем иртереççĕ.

Анчах ку ĕçе пур çĕрте те лайăх организациленĕ теме çук. Первомайски, Шăмăршă, Канаш вăрманпромхозĕсенче культурăллă ĕçе начар йĕркеленĕ, социализмлă ăмăртăва кирлĕ пек организацилемен. Çавăнпа кунта ĕç тухăçлăхĕ пысăк мар, кадрти рабочисемпе сезонниксем нумайăшĕ хăйсен ĕç нормине тултараймаççĕ.

Профсоюз организацийĕсен массăллă-политикăллă ĕçе ертсе пырассине лайăхлатмалла, новаторсен опытне анлăн сармалла.

Рабочисене политикăллă воспитани пасси, вĕсен ăнланулăхĕпе активлăхне ÿстересси профсоюз организацийĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăмалла.

Телемесĕр ларакан пĕр клуб та, хĕрлĕ кĕтĕс те пулмалла мар. Кулленхи ыйтусем тăрăх иртерекен калаçу, ăнланмалла лекци, çĕнĕ кĕнеке, хаçат çинчи статья, радио—çаксем пурте вăрманта ĕçлекенсен культурăпа политика тата техника шайне ÿстерме, вăрман хатĕрлемелли плана хăвăртрах тултарма пулăшаççĕ.

Малта пыракан рабочисен, бригадăсен тĕслĕхĕсем тăрăх ĕç çине, совет государстви умĕнчи патриотла тивĕçе пурнăçа кĕртесси çине ăнланулла пăхма вĕрентмелле. Ăмăртура малта пыракансен опытне сарма наглядлăй агитацие усă курмалла, рабочисен пухăвĕсем, производствăллă канашлусем, стахановецсен касăсем, малта пыракансемпе тĕлпулусем иртермелле. Стахановецсем ĕç тухăçлăхне мĕнле майпа ÿстернине уççăн кăтартса памалла.

Халĕ, республикăра вăрман хатĕрлемелли плана тултарса çитерес тĕлĕшпе стахановла уйăхлăх пынă вăхăтра, вăрманпромхозсенчи профсоюз организацийĕсен ответлăхĕ уйрăмах ÿсет. Йывăç хатĕрлемелли сезонти плана уйăхлăх вăхăтĕнче тултарассишĕн вăрман промышленноçĕнчи рабочисем, колхозниксем, инженерсемпе техниксем тата служащисем хушшинче социализмлă ăмăртăва çĕнĕ хăватпа вăйлатса ярар.

Ф. РОМАНОВ,
Чăвашоблпрофсовет председателĕ.

Совет Союзĕпе Монголи пĕр-пĕринпе договор тунăранпа ултă çул тултарнă ятпа

Монголи Халăх Республикин Аслă Халăх Хуралĕн Президиумĕпе Министрĕсен Совечĕн савăнăçлă ларăвĕ

УЛАН-БАТОР, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Монголи Халăх Республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси çинчен договор тата экономикăпа культура енĕпе килĕшсе ĕçлесси çинчен килĕшӳ тунăранпа ултă çул тултарнине паян Монголи халăхĕ савăнса уявлать. Çак чаплă уяв çинчен паян Монголи центрти тата вырăнсенчи хаçачĕсенче статьясем нумай пичетлесе кăларнă.

Договор тунăранпа ултă çул тултарнă ятпа паян государстви Улан-Баторти музыкăпа драма театрĕнче Монголи Халăх Республикин Аслă Халăх Хуралĕн Президиумĕпе Министрĕсен Совечĕн савăнăçлă ларăвĕ пулнă. Театр залне уяв чухнехи пек тирпейлесе илемлетнĕ. Театр залне Монголи Халăх Республикин Аслă Халăх Хуралĕн ыран уçăлмалли черетлĕ сессине килнĕ депутачĕсем, Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн паян хушăри пленумĕнче пулнă çынсем, столицăри общественность представителĕсем, Монголи халăхĕн революциллĕ çарĕн генералĕсемпе офицерĕсем, Улан-Баторти предприятисенчи чи лайăх ударниксем пухăннă. Ларăва ССР Союзĕн Монголи Халăх Республикинчи посольстви членĕсем, Китай Халăх Республикин Демократиллĕ Корея Халăх Республикин посольстви членĕсем килнĕ.

Савăнăçлă ларăва пухăннисем нумайччен тăвăллă аллă çупса тата «урра» кăшкăрса, мĕнпур ĕçсемпин аслă çулпуçĕпе учителĕ, халăхсем хушшинчи мирпе туслăх ялавне çӳле тытса пыракан, Монголи халăхĕн чи лайăх тусĕ Иосиф Виссарионович Сталин ятне саламлă телеграмма яма йышăннă.

Совет Союзĕпе Монголи Халăх Республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси çинчен договор тата экономикăпа культура енĕпе килĕшсе ĕçлесси çинчен килĕшӳ тунăранпа ултă çул тултарни çинчен Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕн заместителĕ, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Лхамсурун доклад тунă.

Савăнăçлă ларăва пухăннисене ССР Союзĕн Монголи Халăх Республикинчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолĕ Г. Н. Иванников саламланă.

Савăнăçлă ларăва пухăннисем пысăк çĕкленӳпе Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитетне салам яма йышăннă. Ларура юлашкинчен «ССР Союзĕпе Монголи Халăх Республикин государство гимнĕсене юрланă.

Совет Союзĕн, Китайăн, Чехословакин тата Венгрин кинодеятелĕсене чысласа

Делири пысăк митинг

ДЕЛИ, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн, Китайăн, Чехословакин тата Венгрин кинодеятелĕсене чысласа ятпа ĕнер Делире пысăк митинг пулнă. Ăна Совет Союзĕн кинаделегацийĕ тепĕр кунне Калькуттăна тухса кайиалла чухне ирттернĕ. Тĕнчери çĕршывсен Индири пĕрремĕш кинофестивалĕ тепĕр эрнерен Калькуттăра вĕçленмелле.

Митинга 10 пин çын ытла пухăннă. Ăна Демократиллĕ хĕрарăмсен лиги, Демократиллĕ çамрăксен лиги, Профсоюзсен Делири конгресĕ, Прогрессивлă писательсен ассоциацийĕ тата Совет Союзĕ тусĕсен общести пухнă.

Демократиллĕ хĕрарăмсен ассоциацийĕ ячĕпе митинга Сарла Гупта сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Индири кинофестивальте Совет Союзĕн, Китай Халăх Республикин тата ытти демократиллĕ çĕршывсен фильмĕсене кăтартрĕç, çав фильмсем Инди халăхĕн куçĕсене уçрĕç. Инди халăхĕ çав фильмсенчен çăнăçлă кĕрешме пыма вĕренет. Вырăссен кинофильмĕсене питĕ аста ӳкернĕ, вĕсем питĕ паха тата вĕсенче чăн пурнăçа кăтартнă».

Юлашкинчен Сарла Гупта хăнасене чĕререн тав тунă.

Профсоюзсен Делири конгресĕ ячĕпе митингра Джанардан Шарма сăмах тухса каланă. Вăл кинодеятельсен делегацийĕсене Инди столицинчи çĕршер пин рабочисенчен хĕрӳллĕ салам каланă.

Совет делегацийĕ ячĕпе СССР Кинематографи министрĕн заместителĕ Семенов юлташ ответлă сăмах каланă. Вăл Дели хулин гражданĕсене Совет Союзĕнчи кино представителĕсене ăшă кăмăлпа йышăннăшăн чун-чĕререн тав тунă.

Митинг пĕтнĕ хыççăн Совет Союзĕнче ӳкернĕ «Советский Таджикистан» тата «На арене цирка» кинокартинăсене кăтартнă.

Бразилире тĕнчери çĕршывсен Мускавра пулмалли экономикăллă канашлăвне хатĕрленеççĕ

МОНТЕВИДЕО, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕнчери çĕршывсен Мускавра пулмалли экономикăллă канашлăвне хатĕрленес тĕлĕшпе Бразилире ĕçлекен комитет «Импренса популар» хаçатра хăй ĕçне калăнине пичетлесе кăларнă. Çав чĕнӳре комитет канашлу умне лартнă тĕллевсем çинчен пĕлтернĕ.

Хаçатсен представителĕсемпе калаçнă чухне комитет членĕ Эдгар де Толедо «Бразили чылай çĕршывсемпе сыхăну тытманни пире пысăк сиен кӳрет», тесе каланă. Унтан Толедо Бразили ССР Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе тӳрремĕнех сыхăнса суту-илӳ тума тытăнни Бразилие мĕн чухлĕ усă парасси çинчен тĕплĕ каласа кăтартнă. «Хамăр çĕршывра пир-авăр фабрикисене юсамалла тата пысăклатмалла, анчах Англире тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пир-авăр тĕртмелли станоксем туянма тытăнсан, тĕрлĕ чăрмавсем тухса тăраççĕ. Вырăссемпе чехсем пир-авăр тĕртмелли паха тата пысăк хăватлă станоксене пӳнĕрех хакпа сутма пултараççĕ. Çав икĕ çĕршыв пир-авăр тĕртмелли тĕнчери чи паха тата чи йӳнĕ станоксене туса тăнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ», тенĕ вăл.

Толедо тата Румыни Бразилие—селитра, Польша—çĕр кăмрăкĕ сутма пултарни çинчен каланă. Юлашкинчен Толедо Бразилие Совет Союзĕнчен уйăрма тăрăшакан, Совет çĕршывĕпе сыхăнса тăма чăракан çынсене питленĕ.

Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухас тĕлĕшпе ĕçлеме Пĕтĕм Китай комитетне тунă

ПЕКИН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Китайăн центрти пур хаçачĕсем те Китай Халăх Республикинче тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне ирттерме палăртни, çав канашлăва пухас тĕлĕшпе ĕçлеме Пĕтĕм Китай комитетне туни çинчен пĕлтереççĕ. Комитета финанспа экономика учрежденийĕсен, промышленноçпа суту-илӳ организацийĕсен, кооперативсен, профсоюзсен представителĕсем, экономистсем тата ытти организацисен представителĕсем кĕреççĕ.

Комитет хальхи вăхăтра канашлу пухма хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлени, çав ĕçе тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухакан Пĕтĕм тĕнчери пуçару комитечĕпе тата канашлăва хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен ытти çĕршывсенчи комитетсемпе тачă сыхăнса туса пыни çинчен пĕлтереççĕ хаçатсем.

Хĕвеланăç Германире Гитлерла çар преступникĕсене хӳтĕлеççĕ

БЕРЛИН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çапла пĕлтерет: Аденауэр Лондона кайсан, унта Англи правительствинчен Гитлер çарĕнче пулнă çынсене ирĕке кăларма ыйтнă. Вăл ирĕке кăларма ыйтнă çынсем хушшинче Гитлер çарĕнче пулнă 3 фельдмаршал, 7 генерал. Вĕсенчен нумайăшне тыткăнри çар çынĕсем тата Гитлер çарĕ оккупациленĕ çĕршывсенчи граждансла халăх тĕлĕшпе тискер ĕçсем тунăшăн асаплантарса вĕлерме приговор йышăннă пулнă, кайран çав приговора улăштарса, ĕмĕр тăршшĕ тĕрмере хупса усрамалла тунă.

Кунта Англин Верль тĕрминче ларакан Кессельринг, Манштейн тата Лист фельдмаршалсем, фон Макензен, Мельтцер, Галленкампф, фон Фалькенхорст, Вальтер Кунц, Симон генералсем тата эсэсовецсен генералĕ пулнă Курт Мейер çинчен сăмах пырать.

Çак преступниксене Хĕвеланăç Германи çарĕн командованийĕнче пысăк ĕçсем яма палăртнă, тет агентство.

БЕРЛИН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Бонн хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, паян Англин Верль тĕрминчен каллех 11 çар преступникне ирĕке кăларнă. Ирĕке кăларнисем хушшинче Гитлер çарĕн генералĕ пулнă Карл Галленкампф пур. Ăна тыткăнри 31 çар çыннине вĕлернĕшĕн тата Англин виçĕ парашютистне амантнăшăн вĕлерме суд тунă пулнă. Анчах çав приговора кайран улăштарнă, ăна ĕмĕрлĕхе каторга тĕрмине хупмалла тунă. Халĕ вара ăна ирĕке кăларнă. Галленкампф та Аденауэр нумай пулмасть Лондонра пулнă чухне Англи правительствинчен ирĕке кăларма ыйтнă 10 фельдмаршалпа генерал шутне кĕрет. Аденауэр çав çынсемпе Хĕвеланăç Германи çарне тунă çĕрте усă курма шутлать.

Ирĕке кăларнă 11 çар преступникĕ хушшинче ĕлĕкхи Гитлер çарĕнчи аслă офицерсем, СС офицерĕсем тата концентраци лагерĕсен пуçлăхĕсем, лагере хупнă çынсене тискеррĕн вĕлернĕшĕн судпа айăпланăскерсем, темиçе çын пур.

БЕРЛИН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Бонран пĕлтернĕ тăрăх, Аденауэр тĕрмерен кăларма ыйтнă фон Манштейн, ĕлĕк Гитлер çарĕн генерал-фельдмаршалĕ пулнăскер, çичĕ кунлăха «отпуск» илнĕ. Англин Дюссельдорфри органĕсем кун пирки Манштейн «Швацвальде хулине, хăйĕн арăмĕ патне кайса курасшăн», тенĕ.

Тунисри лару-тăру

ПАРИЖ, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Тунис хулинче пысăк демонстраци пулнă. Унта шкулсенче вĕренекен студентсем 1.000 çынна яхăн хутшăннă. Манифестантсем Франци влаçĕсемпе полици Офаке хулинче законсăр ĕçсем туса ирттернине хирĕç протестленĕ. Манифестацие пухăннисене салатса яма хăтланса, полицейскисем куççуль юхтаракан газсем янă, манифестантсем çине пăшалсемпе пенĕ. Çавна пула темиçе çын аманнă. Студентсем полицейскисене хирĕç чулсемпе пенĕ.

Сфакс хулинче арабсен пур магазинĕсем те хупă тăраççĕ. Кеф хулинче полици нумай çынсене арестлет, унти халăх çаплах забастовка тăвать. Кайруан хулинчи мечетсене пухăннă студентсем хăйсем протестленине апат çимесĕр пурăннипе кăтартма йышăннă.

«Фран-Тирер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Франци çар трибуналĕсем Тунисри патриотсене «хĕçпăшал усранăшăн» тата халăх демонстрацийĕсене хутшăннăшăн айăпласа приговорсем йышăнаççĕ.

«Паризьен либера» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Наци пухăвне Алжиртан суйланнă депутат—Омеран генерал («нимĕнле партире те тăман республиканец») Франци правительствине «Тунисра Индо-Китайри пек политика тытса пынă пирки, çав политика пĕтĕм тĕнчери миршĕн хăрушлăх кăларса тăратма пултарни çинчен» çырнă çырăва ярса панă.

Çурçĕр Вьетнамри вăрçă

ШАНХАЙ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнамăн информаци агентстви Çурçĕр Вьетнамран пĕлтернĕ тăрăх, Вьетнам Халăх çарĕн чаçĕсем Хĕрлĕ юханшывăн (Çурçĕр Вьетнам) сулахайри çыранĕнче 1951 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 1952 çулхи февралĕн 13-мĕшчен çапăçнă вăхăтра тăшман салтакĕсене пилĕк пин çынна яхăн вĕлернĕ тата тыткăна илнĕ, французсен, пуканелле правительствин тĕреклетнĕ пункчĕсене 300 ытла аркатса тăкнă, çавсенчен чылайăшне тытса илнĕ.

Халăх çарĕн чаçĕсем Хоа-Бинь фронтĕнче (Ханойран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) тăшмана хупăрласа илсе вăйлă çапса аркатнă вăхăтра тăшман тылĕнче партизансен кĕрешĕвĕ анлă сарăлнă. Партизансем тăшман салтакĕсене нумай пĕтернĕ.

Демократиллĕ Вьетнам Республикин Халăх çарĕн çĕнтерĕвĕ

ШАНХАЙ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнам Халăх çарĕн чаçĕсем, Хоа-Бинь хулине (Çурçĕр Вьетнам), çĕршывăн вăтаçĕрти районĕсене каймалли çулсем çинчи хулана, Франци оккупанчĕсенчен ирĕке кăларассишĕн нумай вăхăт хушши хытă çапăçнă. Вьетнам Халăх çарĕн чаçĕсем февралĕн 23-мĕшĕнче хулана пĕтĕмпех Франци оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă.

Хоа-Бинь хулине французсем хăйсен çирĕп пункчĕ туса хунă пулнă. Унта вĕсен пысăк йышлă çарĕсем тăнă, тупăсем, танксем, самолетсем тата ытти çар хатĕрĕсем нумай пулнă.

Хоа-Бинь хулишĕн пынă çапăçусенче тăшманăн виçĕ рэгине пĕтерсе тăкнă, 100 çын тыткăна илнĕ, трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тăшман Хоа-Бинь хулинчен тарнă чухне, Вьетнам Халăх çарĕн чаçĕсем унăн икĕ батальонне пĕтерсе тăкнă.

МАЛЬТА УТРАВĔ ÇИНЧЕ АНГЛИЕ ХИРĔÇ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ ПУЛСА ИРТЕÇÇĔ

РИМ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Джорнале д'Италиа» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: виçĕ кун каялла Мальта утравĕ çинчи Ла Валетт портĕнчи ĕççынисем забастовка тума тытăннă. Забастовка тăвакансем Англи влаçĕсем, портри грузчиксен ĕç укçине чакарма хăтланнинне хирĕç протестлеççĕ. Забастовка пуçланнă пирки портри ĕçсем пĕтĕмпех чарăнса ларнă. Влаçсен карапсем çине грузсем тиеме тата карапсене хăвăрт пушатма ирĕксĕрех Англи морякĕсене хутшăнтармалла пулнă.

Утрав çинче кашни кунах Англие хирĕç демонстрацисем пулса иртеççĕ.

МАЛЬТА УТРАВĔ ÇИНЧИ ĔÇÇЫННИСЕМ ĔÇ УКÇИ ÜСТЕРЕССИШĔН КĔРЕШЕÇÇĔ

РИМ, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Мессаджеро» хаçат Ла Валетт хулинчен çакăн çинчен пĕлтерет: унта утрав çинче пурăнакан халăх хушшинчи грузчиксемпе моряксем тăваттăмĕш кун забастовка тăваççĕ. Хулара ĕççыннисен пысăк митингĕсем пулса иртеççĕ. Митингсенче ĕççыннисем ĕç укçи ÿстерме ыйтаççĕ. Ĕççыннисем Англи империализмне хирĕç кĕрешме чĕнекен лозунгсем кăларса тăратаççĕ. Хулара хирĕçӳсем ан тухччăр тесе, Мальта губернаторĕ Англи салтакĕсемпе матросĕсене урама çар тумтирĕпе тухма чарнă. Демонстрантсене хирĕç кĕрешме хулана полицисен чаçĕсене пухма тытăннă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç уйрăм вырăнсенче çапăçнă. Фронтсенче палăрмалла улшăну пулман.

Халăх çарĕн самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем ĕнер Саривонь патĕнче тăшманăн икĕ самолетне персе ÿкернĕ.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: фронтсенче уйрăмах палăрмалла нимĕнле улшăну та пулман. Ĕнер хĕвеланăçĕнчи фронтăн хăшпĕр участокĕсенче Америкăпа Англи интервенчĕсем тата Ли Сын Ман çарĕсем, танксемпе артиллери пулăшнипе, Халăх çарĕн чаçĕсемпе Китай добровольцĕсен чаçĕсен оборонине çине атакăсем тума хăтланнă. Анчах вĕсене каялла хăваласа янă, тăшман салтакĕсене чылай пĕтернĕ.

Ытти фронтсен уйрăм участокĕсенче çапăçакан çарсем пĕр-пĕрне хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе пенĕ, пĕчĕк подразделенисем пĕр-пĕрне хирĕç çапăçнă.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн тăватă самолетне персе ÿкернĕ.

Корейăри калаçусем

ПЕКИН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ февралĕн 26-мĕшĕнче Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусен кун йĕркинчи виççĕмĕш пункта сӳтсе явакан штаб офицерĕсен паянхи ларăвĕнче Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен представителĕ çапла каланă: американецсен калаçусене юриех вăраха тăсас шухăш пулмасан, вĕсен эпир çарсен йышне черечĕпе улăштарса тăрас пирки çĕнĕрен панă сĕнĕве халиччен пек сирсе яма нимĕнле сăлтав та çук, Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕ нейтральнăй çĕршывсем тĕлĕшпе палăртнă кандидатурăсене хирĕç тăма та американецсен нимĕнле сăлтав та çук, мĕншĕн тесен çав государствăсем пур енчен те чăннипех нейтральнăй çĕршывсем пулса тăраççĕ.

Ĕнер американецсем перемири условийĕсене пурнăçланине сăнаса тăракан комиссие кашни енĕн икĕ нейтральнăй çĕршыв кандидатурине тăратмалла, тесе сĕнӳ панă. Вĕсем хăйсен кандидатурисем Швейцарипе Швеци пулни çинчен пĕлтернĕ, Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен кандидатурисем Польшăпа Чехословаки пулмалла тесе каланă.

Çавăн пек маневрсем туса, американецсем Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕ перемири условийĕсене пурнăçланине сăнаса тăракан комиссие нейтральнăй çĕршыв шутласа Совет Союзне кĕртме сĕннине сирсе яма хăтланаççĕ. Анчах Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕ хăй тăратнă, пур енчен те нейтральнăй çĕршыв пулакан кандидатура пирки американецсем нимĕн сăлтавсăрах хирĕç тăнипе нихçан та килĕшме пултараймасть. Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен представителĕ американецсен сĕнĕвĕпе килĕшменни çинчен татăклăнах каланă.

Çурçĕр Атлантика союз совечĕн Лиссабонри сессийĕ пирки

ПАРИЖ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви Çурçĕр Атлантика союзĕ совечĕн февралĕн 20—25-мĕшсенче Лиссабонра пулнă сессийĕ çинчен пĕлтерекен коммюникене пичетлеме панă.

Коммюникерен çакă курăнать: агрессиллĕ Атлантика блокĕ совечĕн сессийĕнче «Европа çарĕ» текенскерне тăвас сăлтавпа Хĕвеланăç Германие хĕçпăшаллантарас пирки нумай канашланă. Çакна пурнăçлассипе çыхăнса тăракан ыйтусене сӳтсе явнă.

Коммюникене усăмлă мар сăмахсемпе çырнă. Унта Атлантика Совечĕ Совет Парижра «Европăна хӳтĕлемелли пĕрлешӳ тăвас» ыйтупа пулнă канашлу çинчен тунă доклада асра тытма йышăнни çинчен каланă. Çав вăхăтрах коммюнике авторĕсем «Европăна хӳтĕлемелли пĕрлешӳ», Хĕвеланăç Германи дивизийĕсене кĕртсен, Атлантика блокĕн «чи пысăк интересĕсемпе килĕшӳллĕ пулать», тенĕ. Атлантика блокĕпе «Европа çарĕ» хушшинчи çыхăнусем пирки пĕлтерӳре: вĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăмалла, «Европа çарĕ» Атлантика союзне кĕмелле, «ăна тĕреклетмелле» тесе каланă.

Ют çĕршывсен хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Лиссабонри канашлура «Атлантикăн» çĕнĕ дивизийĕсене тума палăртнă, 1952 çул вĕçленнĕ тĕле пур енчен те пĕтĕмпех хĕçпăшаллантарса çитернĕ 50 дивизи тума решени йышăннă.

Пĕлтерӳре çĕнĕ дивизисене «хальхи ресурсĕсемпе туллин усă курса тумалли» çинчен каланă.

Çакăнпа пĕрлех Лиссабонри канашлăва пухăннисен ирĕксĕрех çакна йышăнмалла пулнă: васкасах нумай хĕçпăшал хатĕрлессине вăйлатни Атлантика блокĕнчи чылай çĕршывсен экономикинче йывăрлăхсем туса хурать. Франс пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лиссабонри канашлура Франци премьер-министрĕ Фор «Франци хăйĕн наци тупăшĕсене кура мĕн чухлĕ вăй хума май килнине пĕтĕмпех турĕ», тесе каланă.

Коммюникере Атлантика блокне «урăхлатса çĕнетесси» çинчен нумай çырнă. Атлантика блокĕ «плансем туса хатĕрлес тапхăртан» хăйĕн планĕсене «пурнăçласа пырас тапхăра куçать», çавăнпа та унăн ĕçне урăхлатса лайăхлатас пулать, тенĕ.

Буржуалла хаçатсем «урăхлатса çĕнетни» Атлантика блокĕн органĕсене çавăрăнăçуллăрах тума май парать, тесе çыраççĕ. Çапла майпа вĕсем çакăн çинчен канашлура мĕнле сăлтава пула сăмах хускатнине пытарма тăрăшаççĕ. Чăннипе вара, çав ыйтăва Атлантика союзĕн членĕсем хушшинчи хирĕçӳсене пула хускатнă.

Лиссабонри сесси решенийĕсем халăхсен мирне хăрушсăрлăхĕшĕн тата пысăкрах хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Çакна Францири демократиллĕ хаçатсем палăртаççĕ. «Се суар» хаçат: Лиссабонри канашлура йышăннă решенисенчен Францишĕн тата мир ĕçĕшĕн чи пысăк хăрушлăх туса хуракан̆ĕ вăл Хĕвеланăç Германие хĕçпăшаллантарасси тата ăна хĕвеланăçĕнчи державăсен Совет Союзне хирĕçле пĕрлешĕвне кĕртесси çинчен йышăннă решени пулса тăрать, тет.

«Юманите» хаçат Фор Лиссабонран халăха хирĕç тума хатĕрленекен преступлениллĕ ĕçсен программине илсе пыни çинчен çырать. «Бюджетри пысăк расходсене витме çĕнĕ налогсем пухнипе кăна укçа пухма пулать. Çĕнĕ налогсем пухни халăх пурнăçне нихçанхинчен те ытларах начарлатать. Нимĕн ĕçлемесĕр пурăннă король те çавăн чухлĕ налог пухма хăяйман. Çар службинче икĕ çул пулмалли йĕрке тăваççĕ, çамрăксем вара çавăн пек йĕркепе килĕшмеççĕ. Германин фашистла çарне çĕнĕрен тума ирĕк парас мар пирки тунă «гарантисене» пăрахăçлама тата Германин Бонри правителĕсене Атлантика пĕрлешĕвĕн ертсе пыракан органĕсене кĕртме йышăннă. Çав ĕçсене Фор Америка хушнипе, Ачесон хăйĕн аттипе хĕстерсе пусарнипе тăвать», тесе çырать хаçат.

Буржуалла «Монд» хаçат агрессиллĕ Атлантика союзĕн политикине хӳтĕлет, анчах çав вăхăтрах Лиссабонра йышăннă программăна—1952 çул вĕçленнĕ тĕле 50 дивизи тăвассине пурнăçлама йывăр пуласси, Атлантика блокĕнчи çĕршывсен нумайăшĕн укçа енĕпе ĕçсем начар тăни çинчен çырать, çав программа пурнăçланас пирки иккĕленет. «Европăна хӳтĕлемелли пĕрлешӳ тăвасси» çинчен Атлантика блокĕн Совечĕ йышăннă решени пирки çырса, «Монд» хаçат Лиссабонра Франци представителĕсем Германие хĕçпăшаллантарассине, çавна май Германин фашистла çарне çĕнĕрен тăвассине хирĕç тăманнине, çав тĕп принципа пăрахăçлаттарма тăрăшманнине йышăнать.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри реакциллĕ хаçатсем, «Нью-Йорк таймс» хаçат евĕрлисем, Лиссабонри канашлăвăн результачĕсене «историри» паллă ĕçсем пек кăтартма тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах «Дейли уоркер» хаçат çав канашлăва ĕлĕк, тĕнчере иккĕмĕш вăрçă пуçланас умĕн, Мюнхенра тунă сутăнчăкла ĕçрен те хăрушăрах усал ĕç тесе хак парать. Çак канашлу «Францири, Италири тата Англири рабочи класăн юхăмне хирĕç вăрçă хатĕрлени пулать, Германи халăхне хирĕç, Гитлер майлă пулнă çынсене хăйсен руководителĕсем вырăнне йышăнма килĕшмен халăха хирĕç вăрçă хатĕрлени, Испанин фашизма хирĕç кĕрешекен халăхне хирĕç вăрçă хатĕрлени, юлашкинчен, вăл Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсен аслă халăхĕсене хирĕç, мирлĕ пурăнма, хăйсен социализмлă телейлĕ пурнăçне тума, хăйсен çĕршывĕсене чечеклентерме тăрăшакан халăхсене хирĕç вăрçă хатĕрлени пулать», тесе çырать хаçат.

Францире Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне уявлама хатĕрленеççĕ

ПАРИЖ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат Францири хĕрарăмсен союзĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Унта кăçал Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне Францире атомлă хĕçпăшала чарса лартассишĕн тата çав решение пурнăçланине тĕрĕслесе тăма тĕнчери контроль тăвассишĕн кĕрешес, хĕçпăшалсене чакарассишĕн тата çар валли памалли укçа хисепне чакарассишĕн, пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн, миршĕн тăрăшакан правительство тăвассишĕн кĕрешес лозунгсемпе ирттермелли çинчен каланă.

„Колхозник" спорт обществинчи отчетпа суйлав пухăвĕсем

«Колхозник» спорт обществине ертсе пыракансене суйланăранпа çулталăк иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче общество Совечĕсем ялсенчи физкультура коллективĕсене организаци енчен çирĕплетес тĕлĕшпе чылай ĕçлерĕç. Спорт ĕçне вĕренес, физкультурниксен йышне ӳстерес тĕлĕшпе те çитĕнӳсем тунă. Колхозри физкультурниксен спорт ăсталăхĕ ӳсрĕ, ялан ĕçлекен командăсемпе секцисен йышĕ нумайланчĕ. Иртнĕ çулта кăна 4.500 çын ГТО значокĕн нормисене панă, 400 çын ытла разрядри нормăсене тултарнă.

Çăмăл атлетсемпе велосипедистсем уйрăмах пысăк çитĕнӳсем турĕç. Вĕсем Нальчик хулинче пулса иртнĕ РСФСР спартакиадинче Чăваш АССР-ĕн чысне хӳтĕлерĕç. Чăваш спортсменĕсем хăйсен пысăк спорт ăсталăхне кăтартрĕç. Çăмăл атлетика тата велосипедпа чупас тĕлĕшпе пĕрремĕш вырăн йышăнса командăна пăракан 4 парне тата 17 уйрăм парне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Командăри 18 çынтан 12-шĕ РСФСР чысне хӳтĕлерĕç, çăмăл атлетика тата велосипед енĕпе СССР-та мала тухассишĕн пынă ăмăртура пулчĕç. Пирĕн спортсменсем çав ăмăртура та лайăх результатсем кăтартрĕç. Вĕсем ялти çамрăксем хушшинче республикăн 17 рекордне, РСФСР-ăн 6 рекордне, СССР-ăн 4 рекордне çĕнетрĕç. Республикăри «Колхозник» спорт обществинче РСФСР чемпионĕ те пур.

1952 çулта пĕлтĕрпе РСФСР-та мала тухассишĕн Киров хулинче ирттернĕ ăмăртура та пирĕн спортсменсем лайăх результатсем кăтартрĕç, 42 республикăпа облаçсенчи командăсем хушшинче 6-мĕш вырăна тухрĕç. Чылай спортсменсене хаклă парнесем панă.

Халĕ республикăри «Колхозник» спорт обществисем 21 пин физкультурника пĕрлештерсе тăраççĕ. 661 колхозра физкультура коллективĕсем тунă, чылай колхозсене обществăн юридически членне илнĕ.

Чкаловски районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозри физкультура коллективĕ 157 çынна пĕрлештерсе тăрать. 1951 çулта коллектив 140 çынна ГТО значокĕсене илме хатĕрленĕ. 51 çын разрядри нормăсене тултарнă. Колхозра стадион тунă. 12 секци ĕçлет, вĕсем 435 çынна пĕрлештерсе тăраççĕ. Ку коллективри Р. Бикчурин, М. Юсупов, В. Шадрияков юлташсем паллă спортсменсем пулчĕç.

Республикăри физкультура коллективĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пыраççĕ. Отчетпа суйлав кампанийĕ активлă иртмелле, вăл çĕнĕ физкультура коллективĕсем тума пулăшмалла.

Чылай районсенчи физкультурăпа спорт комитечĕсем, «Колхозник» спорт обществин Совечĕсем тата ВЛКСМ райкомĕсем отчетпа суйлав кампанине ирттерме лайăх хатĕрленчĕç.

Чурачăк районĕнче 40 колхоз. Районти чылай колхозсенче 1951 çулта физкультура коллективĕсем пулман. Çак кунсенче 11 колхозра çĕнĕрен физкультура коллективĕсем организациленĕ. Нумай колхозсем обществăн юридически членне кĕнĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем Чкаловски, Советски, Муркаш тата Йĕпреç районĕсенче те ăнăçлă иртеççĕ. Вăл районсенче çĕнĕрен 45 физкультура коллективĕсем йĕркеленĕ.

Çав вăхăтрах Красноармейски, Октябрьски, Куславкка, Шăхасан, Канаш, Çĕрпӳ, Вăрмар районĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем йĕркеллĕ иртмеççĕ.

Районсенчи физкультурăпа спорт комитечĕсен, «Колхозник» спорт обществин Совечĕсен, ВЛКСМ райкомĕсен пухусене йĕркеллĕ, активлă ирттерме пулăшмалла.

В. НИКИТИН,
Республикăри «Колхозник» спорт обществи Совечĕн председателĕ.

Пĕлтерни

Февралĕн 29-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче ВКП(б) историне вĕрентекен консультантсем валли «Большевиксен партийĕн теориллĕ никĕсĕсем» тема тăрăх семинар пулать.

Руководителĕ—М. Г. ГРИГОРЬЕВ юлташ.

ВКП(б) историйĕн кĕске курсне марксизм-ленинизм произведенийĕсем тăрăх иккĕмĕш çул вĕренекен кружок руководителĕсем валли «Большевиксен партийĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантарассишĕн, коммунизм строительствишĕн кĕрешни» тема тăрăх лекци пулать.

Лекцие А. Ф. СЮТРУКОВ юлташ вулать.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 29-мĕшĕнче, каçхине вырăсла спектакль
«ЗА ЧЕМ ПОЙДЕШЬ, ТО И НАЙДЕШЬ»
Спектакль 20 сехетре пуçланать.
ЧАСАХ!
Вырăсла спектакль
„Три сестры"

Шупашкар хулинчи Ленин урамĕнчи 17-мĕш çуртăн иккĕмĕш хваттерĕнче пурăнакан Швецов Александр Тимофеевич хăйĕн арăмĕнчен — Шупашкар хулинчи К. Иванов урамĕнчи 5-мĕш çуртăн виççĕмĕш хваттерĕнче пурăнакан Швецова Ольга Андреевнăран уйрăлма ĕç пуçарнă.
Ĕçе Шупашкар хулинчи 1-мĕш участокри халăх сучĕнче пăхса тухаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00334 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.